№ 638
28-83

# ШЕЛЕПИ
# ÇЫРНИСЕН ПУХХИ



Н. ПОЛОРУССĂВ (ШЕЛЕПИ)

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шупашкар—1928

# ШЕЛЕПИ
# ÇЫРНИСЕН ПУХХИ

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шупашкар 1928 ç.

Типография
«ЧУВАШСКАЯ КНИГА»
Чебоксары, Чувашская 6

Чувашлит № 69 зак 501 Напечат. 2000 экз.

## ШЕЛЕПИ.

Ěлěкрех, пěр 5—6 çул кайарах, Шелепийе Уç теђђěç. Унђен вăл Полоруссăв пулнă. Халě ăна „Шелепи—Уç—Полоруссăвиђ“ теме те май пур. Шелепи—Уç—Полоруссăвиђ çырма пуçлани 20 çул иртнě. Вăл ђăвашла çыракансен ватă квартийě пулаť. Полоруссăв ытти çыракансенђен пěтěмпех уйрăмăн тăраť.

„Канаш“ сойусěн пўровě хушнипе Уçăн, вăлах Шелепи, Полоруссăв, 20 çуллă йупилейě кун манăн сăмах каламалла пулђě[1]). Çав сăмахра епě ун ђухне Уç хресђен поеђě иккенне, вăл йал шухăшне çырулăхра пěлтерсе тăнине кăтартса парсаттăм. Уç поет урăхла пулма пултарайман та. Унăн пуриăç çулě ăна урăх сукмак кăтартман.

Шелепи 1881 çулта, ака уйăхěн 27-мěшěнђе çуралнă. Унăн çěршывě Тутар респуплěкěнђи Çěнě Ўсел йалě пулнă. Çěнě Ўсел Ђистай канттонěн Кăтăш вулăсне кěрет. 1895 ç. Шелепи йал школне вěренсе тухаť. Школ хыççăн вăл пěрмай хресђен ěçěпе пурăнаť. „Çырма 1905-мěш çулхи револютси хускатнă хыççăн пуçларăм,“—тет Шелепи.

---

[1]) Ку йупилейа „Канаш“ сойусě йанварěн 27-мěшěнђе 1926 çул Ђăваш респуплěкěн 1-мěш сйесне килнě телекатсемпе пěрле туса ирттерчě.

„Хыпар“ пётсен ниçта сырма çуккипе ђёре пăшăлтатма пуçларĕ,“—тет вăлах.

„Малтанхи сăвă çĕленппе кайăк çапăçни çинђен пулђĕ. Çĕлен тесе улпут-шыçмаксене кăтартас терĕм, кайăк тесе ĕççыннине кăтартас терĕм,“[1])—тет малалла Шелепи.

Шелепи 1906-7 çулсенђе тутарла та çырнă. Унăн сăввисем тутар хаçађĕсенђе паллă вырăн йăшăнса тăнă.

„Кив Тимушкел йалĕнђе
Пĕр Ваçанкка пуйан пур.
Кирек ăçта пырсан та
Ун умĕнђе пурте пур...
У акнă та, вырнă та,
Пуçтарнă та, çапнă та...
Ваçанккашăн çын çех мар
Çилпе шыв та ĕçлеççĕ...
Питĕ хытă пулăшаť
Аптăранă çынсене—
Сĕлĕх пекех сăхаť вăл
Ђухăнсенĕн йуђсене...
Вăл хĕрхенет çуксене—
Тем ђул параť укçине,
Илме вăхăт çитсессĕн
Тин пустараť вут çине.
(„Ваçанкка,“ 1915 ç. çырнă[2]).

[1]) „Шелепи сăввисем“ 1-мĕш том, 114-мĕш страниtсă, „Тав“, Шупашкар, Ђăваш Кĕнеки Уйрăмĕ, 1926 çул.

[2]) Çав кĕнекеннех 67-мĕш страниtсине пăх.

Шелепи йал кулаке ђухӑна йепле майпа хӗснисене хӑйӗн урӑх сӑввисенђе те кӑтартаТ.

Ўнӑн „Кӗпер хывни,"[1]) „Утçи,"[2]) тенӗ сӑввисенђе хресђен йепле ӗç туни çинђен çырнӑ.

„Ах ӗнтӗ! пӑх ӗнтӗ!
Курка тӗпне кур ӗнтӗ
Епӗ йепле. ес çапля
Вӗлт çавӑрса хур ӗнтӗ...
Кӗрӗс! кӗрӗс! тапари?
Урай кашти хуçари?
Тӑпӑр-тӑпӑр тӑпӑрђӑк,
Урай хӑми сӑпӑрђӑк,
Йӑкӑш-йӑкӑш шӑвари?
Пўрт урайне çӑвари?
(„Ӗçкӗ çикӗсем").

Çапла Шелепи—хресђен сӑвӑçи. Халӑх хушшинђи лекентӑсене те вӑл ђылай сӑвӑласа çырнӑ. „Пўлере илни," „Ессепе," т. ыт. те.

Полоруссӑв—Уç—Шелепи поет писсаттӗл фоттокрафи йевӗрлӗ. Вӑл хӑйӗн сӑввисене, калавӗсене, трамисене куçа курӑннӑ йапаласене йӗркипе çырса пынӑ пек çеç ўкерсе, çырса пыраТ. Ӗненменсемшӗн епӗр вулакана „Çӗрпў пасарӗ," йе „Шупашкар" тенӗ сӑввисене сӗнме пултаратпӑр.

Шелепи вуткӑварлӑ поет мар. Унӑн сӑввисем ђӗрене кӑтӑклантармаççӗ. Уç поет йеррипен çеç йапалана çутатма тӑрӑшаТ. Хресђен пурнӑçӗ—унӑн сӑвписен йӑви.

1) I-мӗш томӗн 74-мӗш странитси.
2) I-мӗш томӗн 80-мӗш странитси.

Уç—Шелепи—Полоруссăв сăвăллă йапаласемсĕр пуçне калавсем те, хăй курса çӳренисем çинђен те[1]), трамă та[2]), тата урăхла йапаласем те çыраť.

Пуринђен ытла вăл школ ађисемшĕн кирлĕ, вĕсене килĕшӳллĕ йапаласем çырма тăрăшаť.

Ђăваш хушшинђе Шелепи пек вата поет сахал. Хăй ватлăхне пăхмасăрах вăл сăвăсем çырма пит йуратаť. „Сăвăсемпе çеç пурăнатăп“ тет пирĕн поет. „Сăвăсенђен хакли, вĕсенђен пахи маншăн тĕнђере урăх йапала çук,“—тет вăл.

Полоруссăв сăввисене школ ађисем йуратса вулаççĕ, школ ађисем çеç мар, унăн сăввисем хресђеншĕн те пит паха. Çавăнпа та Шелепи йађĕ ђăваш хушшинђе сарăлнăçем сарăлса пыраť. Унăн ђи паха йапалисем: „Пӳлере илни,“ „Ессепе,“ „Кĕçтенттиноппăљ хулине туни çинђен ђăваш ваттисем калаçни.“ Шелепийе епĕр „Вата стариксемпе вĕтĕршакăрсен поеђĕ“ тесен йăнăшах пулас çук, мĕншĕн тесен, унăн йапалисем çавсене килĕшӳллĕрех, вĕсемшĕн çырнă. Шелепи йапалисене пурне те уйрăм кĕнекесем туса çапса кăларма хушсађђĕ унăн йупилейне иртерме пынă çынсем.

Шелепийе вàрăм ĕмĕр сунар, унăн ĕçĕсем малашне те ăнăçлă пулђђăр!

**Солăттăв М.**

24/VIII-27 ç.

---

[1]) Йетĕрне уйесĕнђе çӳрени.

[2]) Амаçурџ.

## Аслă Октяпĕр.

Аслă Октяпĕр,
Аслă Револютсийĕ,
Ђăнђăнах ђаплă,
      Хăватлă вăл...
Империалисăм
Тĕп никĕсне
Çĕмĕрсе пăрахрĕ
      Çав тăвăл!
Ĕçхалăхĕн
Аслă Револютсийĕ,
Октяпĕр уйăхĕ
      Пулђĕ вăл.
Йунлă, хĕнхурлă
Пусмăр тĕнђине
Аркатса йађĕ
      Вăл тăвăл!

* * *

Аслă Октяпĕр
Хĕрӳ вуђĕпе
Совет влаçĕ
      Çуралса тухрĕ!
Пĕтĕм тĕнђери
Ĕççынни çине
Çĕнĕ хĕвел
      Çутăлса пăхрĕ!..
Пусмăрти мĕн пур
Вак халăхсене
Хĕрлĕ йалав
      Айне пухрĕ!..
Вĕсен хаклă йунĕ
Нумай йухрĕ!
Йунлă Раççейе
      Йунпа ухрĕ!

* * *

Совет патшалăхне
Вутпа турĕç...
Пусмăр тĕнђине
Йунпа çурĕç!
      Кĕрешме мĕн пур
      Ђухăна ђĕнђĕç...
      Пуршуаçине
      Çапла çĕнђĕç!
Раççей пуршуйсен
Пусмăр тĕнђине,
Вутпа персе
Çунтарса йађĕç...

Çavă hăruşă
Kĕreşŭpe çeh,
Ĕççynnisene
Irĕklĕh paђĕç.

* * *

Aslă Oktăpĕr
Hĕrŭ vuђĕ çeh,
Kăpitalisma
Arkatsa jaђĕ.
Pĕr văl anђah
Vuta hirĕç vut paђĕ...
Irĕklĕh çulĕ
Tupsa paђĕ!
Pĕtĕm pusmărti,
Hĕnhurti halăh
Oktăpĕr sassipe
Savănsa tăraț.
Ăna văl hăjĕn
Ђunĕ pek kuraț...
Văl ђĕnnĕ çĕre
Ytkănsa pyraț!
Unşăn văl mĕn pur
Văjhalne huraț...
Hăj kuçĕ pek
Syhlasa tăraț!

* * *

Sotsialisămla
Sovet patşalăhĕ,
Pĕtĕm tĕnђe
Ĕççynnin,
Pĕrten pĕr ђaplă,
Vutlă... hăvatlă...
Irĕklĕ
Patşalăhĕ...
Vĕsem ăna
Pĕtme irĕk pamĕç...
Purşuaçine
Un çine jamĕç!

* * *

Aslă Oktăpĕr
Çulămĕ anђah
Pusmăr ylhanne
Çuntarsa jarĕ...
Ĕmĕrhi tisker
Hĕnhur tĕnђine
Pĕr văl anђah
Kanăçlăh parĕ.
Oktăpĕr anђah
Pĕtĕm çĕr çine
Sotsialisăm
Çuttine sarĕ.

* * *

Aslă Revoљutsioner
Vlatimĕr Ilјiђ
Lenin!
Kĕreşŭ çulĕ

Кăтартса панипе,
Комуниссен партти
Йертсе пынипе,
Пĕтĕм ĕççынни,
Пĕтĕм хресђен,
Харăссăн тăрса,
Малалла утрĕ...
Йунлă пуршуаçи
Йун ăшне путрĕ...
Йунлă кăпитала
Сӳнми вут хыпрĕ!

1927-мĕш çул,
Шупашкар.

## Аслă Октапĕр револђутсийĕ ђăваш халăхне мĕн пађĕ.

Аслă Октăпĕрĕн çулăмĕпе çунса,
Акă ĕнтĕ епĕр ирĕклĕх илтĕмĕр!
Хаçат та пур пирĕн, шурнал та хамăрăн.
Ђăваш поеђĕсем, писсаттĕлсем те пур...
Композиттăрсем те, арттиссем те пур.
Ђăваш мусăкĕ те, ђăваш хорĕ те пур.
Киносем çинђе те ђăвашсем выљаççĕ,
Крамофонсем те ђăвашла йурлаççĕ.
Ђăваш театтăрĕ те, кăлупĕсем те пур.
Мускав та пирĕнпе ђăвашла калаçать,
Ленин хулинђе те ђăваш сасси йанрать.
Тутарсемпе пушкăрт пуç хулисенђе те
Тата ытти хăш-хăш пысăк хуласенђе те
Ђăвашсен сасси хытă кĕрлесе тăрать.
Промышлĕннăç та пирĕн ӳссе пырать.
Ăна пĕтĕм тĕнђе, пĕтĕм ĕççынни курать.
Ђăваш шкулĕсем те, ăслăлăх вĕреннĕ
Ăслă çыннисем те хăвăрт нумайланать.

Уншăн пĕтĕм ђăваш, пĕтĕм ĕççынни рат.
Ђăваш поеђĕ те ăна савăнсах çыраť.
Пуринђен ытла ђăваш респуплĕкĕ,
Хамăрăн ирĕклĕ ђăваш çĕршывĕ,
Ђăваш хулисем, аслă тытăмĕсем,
Ђăваш халăх ĕçне йертсе пыракансем,
Ђăвашсен хастарлă, паллă çыннисем пур.
Анђах вĕсем пурте питĕ çамрăк халĕ?
Ун пирки поет та, такам та çаплах калĕ!
Хăçан çутă курĕ пирĕн ђăваш йалĕ!
Хăçан нӳхреп куç çĕр çинђен çухалĕ!
Çавăн ђухне тин ђăваш йалĕ çуталĕ.
Тĕттĕмлĕх, ђухăнлăх нумайђђен муталĕ.
Аслă Октăпĕрпе ђăваш кĕнеки
Аслă оккеан урлă вĕçсе ӳкрĕ...
Ђăваш сассине пĕтĕм тĕнђе илтрĕ,
Ђăваш ĕççыннин, ђăваш халăхĕн
Илемлĕ кунçулĕ, тӳлек лăпкă кунĕ,
Телейлĕ пурăнăçĕ тинех килсе çитрĕ.
Уншăн хĕсепĕ çук хаклă йулташ пĕтрĕ,
Вăл ирĕклĕх пире питĕ хакла ӳкрĕ.

1927-мĕш çул, Шупашкар.

## Ђăваш хĕрарăмĕ.

Турăм т̆ыха, турăм т̆ыха —
Мăйăмран хăмăт тухмарĕ.
Турăм ађа, турăм ађа
Аллăмран ĕç каймарĕ.

Ђун ыратнă йенне тухат̆ вĕсен ун пек сăмахсем,
Ђĕри вутпа çуннă ђухне калаçакан йумахсем.
Вăл ĕçпеле çуралса, ĕçпех ӳссе çитĕнет,
Ĕçле-ĕçлех кайса ӳксе, тăпра айне витĕнет.
Ури ађа сиктерет ун, алли арлат̆ кĕнђеле,
Ларса канма пĕлмесĕрех ирттерет вăл кунсене.
Хирти-килти мĕнĕпех вăл пур ĕçе те ĕлкĕрет.
Пурăнăçне йусас тесе куççулпелех вăл йĕрет.
Хĕлĕн-çăвĕн, çĕрĕн-кунĕн уйрăлаймаст̆ ĕçĕнђен.
Нумайĕшĕн вилиђђенех куççуљ типмест куçĕнђен.
Мĕн пур çемйи çийĕ-пуçĕ ун хăй алли тăвĕçĕ.
Хура çĕрпе хупланиђђен нихçан пĕтмест ун ĕçĕ.
Сухине те сухалат̆ вăл, çи-пуçа та питĕрет.
Утине те хăйех çулат̆, тыррине те хăй вырат̆.
Ађа-пăђа ӳстересшĕн пĕтĕм ђунтан хуйхăрат̆.
Çапла ђăваш хĕрарăмĕ, ĕмĕр-ĕмĕр хĕн курат̆,
Ĕлĕк патша вăхăтĕнђе ăна пушшах хĕсĕкђĕ:
Вăрçсассăн та, çапсассăн та йĕређђĕ те тӳсеђђĕ,
Çӳç вăрăм та, ăсĕ кĕске, теђђĕç ăна ун ђухне,
Выљăх пекех шутлађђĕç вăл вăхăтра çын йăхне.
Хăйне тивĕç йат çĕрне те паман ăна патшасем.
Ђура туса çыхса тăнă пуршуйсемпе пађшкасем,
Халĕ ĕнтĕ хĕрарăм та арçынсемпе тан тăрат̆.

Совет влаçĕ пулнăранпа ун сасси хыт йанăрат.
Пĕтĕм Совет Сойусĕпех хаҍ хĕрарăм ирĕклĕ,
Ăçта тухса çӳресен те ун сăмахĕ çирĕплĕ.
Ҍасах ҍăваш хĕрарăм те çутăлтарĕ хăй йатне.
Хулара та, йалсенҍе те кăтартĕ вăл хăватне.

1927-мĕш çул, Шупашкар.

---

## Çирĕмĕш ĕмĕр.

Епĕ çирĕмĕш ĕмĕрте
Ҍаплă вăхăтра пурăнтăм.
Çавăнпа сахал вĕренсе
Ҍаплă ĕç тума тытăнтăм.
Халăх, ĕмĕрех манас çук,
Çирĕмĕш ĕмĕр ĕçсене...
Патшасем, вăрçă хускатса
Пĕтерҍĕç хăйсен пуçсене.
Пĕтĕм тĕнҍери пуршуйсем
Ҍысти урнă пек тулашрĕç.
Вĕри çĕлен пек пĕрпĕрне
Хыпса çăтмашкăн тăрăшрĕç.
Хăрушă вутлă тăвăлсем,
Пĕтĕм тĕнҍипе çӳрерĕç...
Сывлăш çинҍе те, шывра та,
Тĕнҍе пĕтнĕ пек кĕрлерĕç.
Йăт çӳппи вырăнне хумасăр,
Çунтарса пĕтерҍĕç пурлăха,
Пинĕ-пинĕпе вагта-вĕтте,
Хăварҍĕç тăлăха-хурлăха.

Купи-купипе çын вилли,
Вăхăтсăр çĕр айне кĕђĕçĕ.
Ку пуршуйсен тискер ĕçĕсем
Хăçан çĕр çийĕнђе пĕтĕçĕ.
Çĕре пăр салатса йарас пек
Кĕрĕслетсе тăђĕ туп сасси...
Ахăрса, йăнăшса, макăрса,
Уласа тăђĕ йун сасси.
Вутпа, туппа пеђĕçĕ,
Вилĕм кассем йађĕçĕ.
Хĕвеле тĕтĕм хупларĕ...
Тискерленђĕ çут тĕнђе...
Пур ĕççынне вут ăшне
Хăваласа кӳртрĕçĕ...
Вĕççĕр-хĕрсĕр çын вилли
Йун ăшĕнђе выртрĕçĕ.
Оккеансем... тинĕссем
Пăхма хăруш пулђĕçĕ.
Пулђнитсасем... параксем...
Пурте йунпа тулђĕçĕ.
Нумайĕшĕ алăсăр...
Йе урасăр йулђĕçĕ.
Пур çĕрте те хайаррăн
Тискер сасă çухăрђĕ...
Нумай йалсен, хуласен,
Илем кунçул çухалђĕ.
Куççулђ çурĕ çăмăр пек,
Çырма пек, йун йухтарђĕç...
Хăруш тискер ĕçсемпе

Ĕçхалăхнейăлăхтарђĕç.
Вутлă хăруш тăвăлпа...
Тăвăлланђĕ пур çын та...
Тытрĕç алла хĕçпăшал...
Усалли те, ыр çын та.
Акă çавă вăхăтра
Сиксе тухрĕç комунсем...
Пĕттĕр терĕç çĕр çинђе
Ку хăрушă... ку йунсем...
Пуршуаçине вилĕм!..
Вута хирĕç вут терĕç...
Пĕтĕм тĕнђе ĕççынни
Харăс тăрса ут... терĕç.
Хĕрлĕ йалав айĕнђе
Револђутси хускалђĕ.
Майне-шывне тупас çук,
Пĕтĕм тĕнђе пăлханђĕ...
Пĕрне-пĕри ылханђĕ...
Пĕтĕм Раççей йунланђĕ.
Пĕтĕм тĕнђе халăхĕ
Икĕ пайа уйрăлђĕç.
Пусмăртисем сулахай...
Пуршуйĕсем сылтăма.
Пĕр тăвяне ђухăнĕ
Ĕççыннипе пĕрлешрĕ...
Ун тăванĕ пуйанĕ
Пуршуйсемпе пĕрлешрĕ.
Тăванпала тăванах
Пĕрне-пĕри вĕлерђĕç,

Пĕтĕм Раççей пуршуйне
Вутпа персе пĕтерђĕç.
Каласа та пĕтес çук
Ун ђухнехи ĕçсене...
Ашамăшне ађисем
Тăшман пулђĕç куççене...
Пере-пере пăрахрĕç
Хăйсен савнă туссене...
Ђуралăхри, тыткăнти,
Пур хĕнхурти халăхсем,
Ĕççыннипе пĕрлешрĕç...
Харăс тăрса кĕрешрĕç.
Кăпиталăн хăватне
Вутпа персе çунтарђĕç,
Хĕрлĕ йалав вуђĕпе
Пуршуйсене çĕнтерђĕç.
Çапла анђах кăпитал
Ĕççыннине парăнђĕ,
Çапла анђах Раççейре
Йун тăкасси ђарăнђĕ.

1927-мĕш çул. Шупашкар.

## Çул курки.

Иртет иккен ĕмĕр... Пĕтет кунçул...
Ђасах курми пулĕç куçăмсем...
Сирĕн умран епĕ çухалатăп...
Сывă пулăр ĕнтĕ, тусăмсем...
Ех, сăввăмсем.. савнă йулташăмсем..
Йепле епĕ сире йуратрăм...

Сирён хăватăра шыра-шыра,
Нумай шурă хута хуратрăм...
Ак хăвăртах вилём килсе çитĕ...
Ђасах ђёнми пулĕ ђёлхеçём...
Хут çийёнђе анђах тăрса йулё...
Хура тёсçём... салху мёлкеçём...
Пурăнăçăм йăвăр пулсассăн та...
Йуррăмсемпе хытă савăнтăм...
Хуйхă çине хуйхă килех тăђё,
Шухăшла-шухăшла ывăнтăм...
Выртнă вырăн çинђен тăра-тăра
Çыру çинђе лартăм çĕрĕпе,
Тем пек йăвăр хёнхур курсан та,
Пурăнма тăрăшрăм тӳрĕпе,
Хăш-хăш ђухне ăшăм çуннипе,
Хăш ђух савăннипе йурларăм...
Ех, йуррăмсем... савнă йулташăмсем...
Сире пётём ђунтан йуратрăм...
Хăш ђух шăнкăрђ йурри пек шăрантартăм
Хăш-хăш ђухне йури йуптартăм...
Ђăн-ђăнласа çырма тытăннă ђух
Ђысти йухăм шыв пек йухтартăм.
Тăван ђёлхен, тăван çырулăхшён,
Мён пур вăйма хурса ёçлерём...
Кёнекесем çинђи ăслăлăхсем,
Мĕн хушнине хытă итлерём.
Хамăр ђёлхен... Хамăр çырулăхăн...
Вăйхăватне курасђĕ терём...

Тăван халăх питĕ ђухăннипе
Шухăшла шухăшла йĕтерĕм. *)
Вăхăт-вăхăт умри шур хут çине
Куçран куççуљ пăт-пăт тумларĕ...
Ĕçленĕ ĕç ахаљ çухалмарĕ...
Куççуљ тăкни сайа каймарĕ..
Ўтĕм çĕрте çĕрсе пĕтсессĕн те,
Йатăм çĕрмĕ тесе шанатăп.
Пусмăртан хăтăлнă ĕçхалăхĕ
Çутă курĕ тесе савăнатăп.
Ĕççыннисен ђаплă ĕçне тума
Мĕн вăй çитнĕ таран пулăшрăм.
Ђăваш халăх çамрăк çырулăхне
Хăват пама хытă тăрăшрăм.
Мĕскер тăвас тени ђăнах пулђĕ...
Мĕн шыранă, çавă тупăнђĕ...
Ĕмĕтленнĕ ĕмĕт пулса тăђĕ
Ĕçхалăхĕ ĕçе йышăнђĕ.
Саманисем йăвăр пулнипеле
Пурăнăçăм хытă йухăнђĕ.
Саркайăк йурри пек сăввăмсене,
Йурла йурлах куçăм хупăнђĕ.
Мана тăпра айне хунă ђухне,
Куççуљ ан йухтарăр хуйхăрса,
Савăнса калаçса йурла-йурла
Çĕрпе витсе хурăр йуп курса.

1927-мĕш çул Шупашкар.

*) Йĕтерĕм—тарăхрăм.

## Шупашкар.

(Ылттăн Микули кăмăлне сума суса)

Ђăваш хули Шупашкар!
Ту хушшинђи шывлă вар...
Револђутси вуђаххи;
Пăлхăр-Ђăваш пуç хули.
Ларатٌ Атăл хĕрринђе,
Ту ђакăллă çĕр çинђе,
Çырма-çатра çийĕнђе,
Кăкшăм çырми пырĕнђе,
Пĕр, сарлака варĕнђе,
Сăра хуран пек вырĕнђе.
Атăлпала иртнĕ ђух,
Тăрса йулат çутăлса;
Темле ђаплă хула пек
Йăлтăртатса курăнса.
Револђутси ырлăхпе,
Çĕнелнĕçем çĕнелет,
Пусмăр ылхан тĕнђине,
Çĕнтернĕçем çĕнтерет.
Комунисăм çуттипе,
Çутăлнăçем çутăлат;
Пăлхăр-Ђăваш халăхĕ,—
Çутта тухма çул тăват.
Ӳсет пĕлĕт ӳснĕ пек
Халђ унта вăйхăват:
Ирĕклĕхпе савăнса,
Вăл пурне те хăй тăват.

Шавлаҭ-кӗрлет Шупашкар!
Паттӑрланса, ирӗкпе;
Вӑй илнӗҫем вӑй илет
Совет влаҫ тӗрекпе.
Хаљ ӗнтӗ вӑл хастарлӑ!..
Сойуспала пӗр варлӑ.

Ӑҫта тухнӑ вӑл тӗлте,
Ҫӗнӗ ҫуртсем шӑтаҫҫӗ;
Йӑвӑҫне те, ђулне те,
Ҫӳлтен ҫӳле йӑтаҫҫӗ.

Микул патша пыљђӑксем,
Шур ђул айне пулаҫҫӗ;
Урамсене тӑрӑшпех,
Пӗренесем тулаҫҫӗ.

Тӗрлӗ майпа васкаса
Шупашкара йусаҫҫӗ:—
Атӑлпала йӑвӑҫсем
Аҫтӑрхана йухаҫҫӗ.

Решмен карти карнӑ пек
Пӑралуксем караҫҫӗ,
Панулмисен пахђине,
Шкулсем кӗрсе лараҫҫӗ.

Ӗҫсыннисем ӗҫ панђе
Йӑпӑр-йапӑр ҫӳреҫҫӗ,
Пусма таварӗсене,
Кӑрт-карт туртса ђӗреҫҫӗ.

Купа-купа куп туса,
Турттараҫҫӗ ђулсене,

Урамсене урлăшпех,
Ђул сараççĕ çулсене.

Ушкăн-ушкăн хĕрарăм,
Пĕрмай тăпра йăтаççĕ,
Хăшĕ портфĕл тытаççĕ,
Йăлт-йăлт пусса утаççĕ.

Хăшĕ тутă пуласшăн,
Ĕçле-ĕçле çунаççĕ,—
Хăшĕ-хăшĕ укçашăн
Шыв сăрласа сутаççĕ,
Ереххипе сăрине,
Çĕклемĕпе йăтаççĕ.

Совет уйавĕсенђе,
Хĕрлĕ хапха патĕнђе,
Вăхăт-вăхăт халăхĕ,
Çар халăх пек вĕркĕшет,
Шурă çуртсен тăрринђе,
Хĕрлĕ йалав вĕлкĕшет,
Хăш ђух çӳлте йараплан;—
Кĕрлет йавнаť, вăл вĕçет.

Ђăваш хули Шупашкар
Сехеђĕпе çитĕнет:
Мускав хули калаçни,
Умра пекех илтĕнет.

Опкомĕ те тăрăшаť,
Ĕçтăвком та хыт ĕçлет;
Çутпайĕ те çутатаť:
Тĕттĕмлĕхе çухатаť.

Халăх комиссарĕсем,
Ђасђас пуху тăваççĕ:
Ĕçхалăхне сыхлама,
Хурçă никĕс хываççĕ.

Аслă суђĕ сут тăвать:
Кив-кирĕке вăл çăвать:
Хăш йеннелле пăхсан та,
Ўссе пырать вăйхăват.

Нарккомфинĕ пĕрмайах,
Укçа-тенкĕ сутарать,
Шупашкара укçине,
Çăмăр пекех çутарать.

Ђăваш Кнеки Уйрăмĕ,
Кнеке-хаçат çаптарать;
Укçа ђул та ваттарать,
Тимĕре те таттарать,
Хăшне ырлăх кăтартать,
Хăшне йăлтах пĕтерет,
Пĕтĕм тĕнђе халăхне,
Хирĕçтерсе çитерет.

Рапфакĕ те пур унта,
Партшкулĕ те пур унăн:
Ес те, Университтет!
Ђасах унта курăнăн.

Ун ђух сана, Шупашкар,
Тĕнђипеле пĕлĕçĕ:—
Оккеансен леш йенђен
Сана курма килĕçĕ.

Трамвайсем тăр-тăр-тăр!
Тăрăлтатса ђупĕçĕ,
Ђăваш ђаплă поетсем,
Çыракансем тухĕçĕ.

Тĕрлĕ хапрăк-савăтсем
Çĕрĕн-кунĕн çухăрĕç,
Таçти патшалăхĕнђен
Йихравçăсем йăхăрĕç.

Хĕрлĕ плошђăт таврашсем,
Ђемăнт айне йулĕçĕ,
Çĕр айсенђе çуртсенђе,
Шыв çулĕсем пулĕçĕ.

Хаљ унта пит хăвăрт,
Ўссе пырат ăслăлăх:
Тата унпа пĕрлешсе,
Хăват илет ăсталăх,

Тĕрлĕ-тĕрлĕ шкулĕсем,
Нумайлансах пыраççĕ,
Сутуилў ĕçпе те
Пăртак усă параççĕ.

Ђăвашпайĕн суттинђе,
Виççе ĕлкĕреймеççĕ,
Пасар кунĕ ерехне,
Парса çитерейместĕ.

Происвотсойус та,
Хăй хăватне пĕлтерет.
Лонтăнпала Парише
Çăмартине çитерет.

Коркопăн та лапкисем,
Ĕрђенĕçем ĕрђеççĕ,
Виноккурсем пуллине,
Аллăшар пăт çĕртеççĕ.

Ђасран-ђасах киносем,
Камиђĕсем выљаççĕ,
Веђђĕрсем те пулаççĕ,
Лексисем те вулаççĕ.

Тухтăрсем çулленех,
Нумайланса пыраççĕ,
Ђăваш халăх сывлăхне,
Сыхлама май шыраççĕ.

Муçейĕнђе тем ђухлĕ,
Ђăваш аваллăхĕсем:
Ўттумĕсем, шăмăсем,
Тĕрлĕ кайăк йăхĕсем.

Типпокрафи çуртĕнђе
Тем ђул тимĕр машшинă,
Çĕрĕн-кунĕн пĕрмайах
Вĕлтĕртетсе çавăрнаť.

Шурă хутсем вĕлт-вĕлт-вĕлт!
Ыткăнса çех тăраççĕ,
Кĕнекесем шашан пек
Купаланса пыраççĕ.

Комун пайĕ васкаса
Çуртсем, çулсем тутараť,
Вăрман тресĕ йăвăçне
Тĕрлĕ йенне шутараť.

Милитсисем ҫасҫасах
Ҫупкаласа ҫӳреҫҫӗ,
Ӳсӗрсене хӑш ҫухне,
Иккӗн-виҫҫӗн сӗтреҫҫӗ,
Тӗттӗм ҫӗре хӑнана,
Тыта-тыта кӗреҫҫӗ.
Ӗҫҫыннисем ӗҫлесе,
Хула илем кӳреҫҫӗ.
Ҫӗрӗҫ Комиссариаҫ
Пӗрмайах ҫӗр виҫтерет,
Ҫуртйӗрсене ҫулленех
Ҫӳлелле май ӳстерет.
Пионерсем тӑр-тӑр-тӑр!
Параппансем ҫапаҫҫӗ,
Мӑйӗсене уйӑп пек
Хӗрлӗ калстук ҫакаҫҫӗ.
Кайӑкхур пек картипе,
Умлӑ-хыҫлӑ тӑраҫҫӗ,
Харӑс утса йурласа
Кассӑн-кассӑн пыраҫҫӗ.
Тӗп Петтехниккӑмӗ те,
Вӑй илнӗҫем вӑй илет,
Комун шкул ӗҫӗ те,
Йусаннӑҫем йусанаҭ.
Ик сыпӑклӑ шкулӗ те,
Икӗ шкул пур унта:
Аҫасене вӗренме
Вырӑн ҫитмест хаҫ унта.
Пуринҫен те ытларах

Çурт çитменни пĕтерет,
Улмăштарнă вăхăтра
Пĕрне-пĕри перĕнет.
Ун пек çитменлĕхсем те
Ђасах пĕтсе ларĕçĕ,
Çутта тухма çул тунă,
Ђасах çутă парĕçĕ.
Пĕр тытăннă ĕçĕнне
Майне-шывне тупĕçĕ,
Мĕскер тăвас тенине
Тума пулнă—тăвĕçĕ.
Хĕлĕн-çăвĕн халђ унта
Уçăлаççĕ курссăсем,
Ушкăн-ушкăн çӳреççĕ
Йурла-йурла курссантсем.
Ĕççынниве кирлине,
Тĕрлĕ майпа шыраççĕ,
Ĕçђен ђăваш халăхне,
Мĕн кирлине кураççĕ.
Пупсем ђиркӳ пăрахса
Совет ĕçне тараççĕ,
Ђиркĕвĕсем ђирлесе
Кăлуп пулса тăраççĕ...
Електритсă каçхине
Йăлтлатса çех çутăлаť:
Пĕр куç уçса хупиђђен
Шупашкара çутатаť.
Йепле тĕттĕм пулсан та,
Хăш тĕлте йĕп тупмалла,

Хăш урамĕсемпеле,
Хăра-хăра утмалла.
  Мусăк, купăс, кромохвон
Ђăваш йурри йурлаççĕ,
Ораттăрсем ђасђасах
Пуршуйсене хурлаççĕ.
  Шур кĕпеллĕ ђăвашсем
Кино çинђе выљаççĕ,
Хăшĕ ђĕлĕм туртаççĕ,
Хăшĕ йăл-йăл кулаççĕ.
Тутисемпе мĕлт-мĕлт-мĕлт!
Тем сăмахсем калаççĕ,
Пăлхав ĕçсем кăларса,
Политсине хăвалаççĕ.
  Тата унта пупĕсем
Питĕ камит пулаççĕ;
Темĕн те пĕр суйаççĕ;
Суйа-суйах пуйаççĕ;
Ђĕрринђен те илеççĕ,
Виллинђен те илеççĕ,
Ђийађукĕсемпеле,
Вăрçа-вăрçа пÿлеççĕ.
Çăварсене çанă пек,
Тем пысăккĕш караççĕ,
Аслати пек ђиркĕве,
Йанраттарса йараççĕ.
Аллисене тăратсах
Алттарсене кĕреççĕ,
Çиттунисем çĕлен пек,

Авкаланса çӳреççӗ.
Хулӑн, пысӑк сасӑпа
Упа пекех улаççӗ,
Ђухӑн ђӑваш халӑхне
Ђухламасӑр тӑллаççӗ.
Пӳрнисемпе çамкине
Тӑкки-такки ђышаççӗ,
Çынна „типӗ тыт“ теççӗ;
Хӑйсем тем те ђыхаççӗ.
  Вӗсенђен те ӑслисем
Сике-сике тухаççӗ,
Пӑсӑк ӗçе пӑрахса
Усӑллӑ ӗç тӑваççӗ.
  Пуп кунçулӗ пӗтнине
Вӗсем лайӑх сисеççӗ,
Тиаккӑнсем пӗтесшӗн,
Атӑл шывне сикеççӗ.
  Ӳт ђӗлхенӗн шӑмми çук,
Тем те калӗ ђармасан,
Хам мӗн курни-илтнине
Ђӗрем тӳсмест çырмасан.
  Тӑват пилӗк çултанпа
Шупашкарта çӳретӗп:
Уђрештенисене те,
Урӑхне те кӗретӗп.
Вӑй выђанисене те,
Йӗнине те куратӑп,
Тӑван хула пулнӑран,
Шупашкарта тӑратӑп.

Çырам тесен тем те пур;
Шупашкарта хаљ унта:
Куçкĕçки пек курăнаť
Пĕтĕм ђăваш йаљ унта.

Пасар кунсем пулсассăн,
Пушшех нумай çырмалли:
Шăри-шари çухăрни,
Ђĕресене çурмалли.

Хăшĕ вилнĕ шапа пек
Пылђăк çинђе выртаççĕ,
Хăшин-хăшин кăсйинђен
Укçисене вăрлаççĕ...

Халĕ ĕнтĕ малалла
Атăл хĕрне пырăпăр,
Тата унта курнине,
Хăшне пĕрне çырăпăр.

Çулла çӳлте тӳпере
Хĕвел вут пек йăлкăшса,
Йăл-йăл кулса выљаса,
Йăлтăртатса тăнă ђух:—
Ак Шупашкар халăхĕ,
Тухаť каçпа пуљвара,
Каллĕ-маллĕ утмашкăн,
Уçă сывлăш çăтмашкăн.

Пăраçниксем пулсассăн
Ђисти хур пек вĕреççĕ,
Йĕкĕр-йĕкĕр йереççĕ,
Çĕрĕпеле çӳреççĕ.

Ушкăн-ушкăн хĕрарăм,
Темсем пăшăлтатаççĕ,
Вăхăт-вăхăт хускалса,
Хытах йăхăлтатаççĕ.

Алла-аллă тытănса,
Кĕлт-кĕлт пусса утаççĕ,
Хулĕсемпе лектерсе,
Ђăмăртаса тытаççĕ.

Пĕрне пĕри куççенђен
Ђăр-ђăр! пăхса илеççĕ,
Çамрăк пуçри шухăша
Куçран пăхсах пĕлеççĕ.

Ват çăкасен айсене
Пыра-пыра лараççĕ,
Тĕтĕмсене çӳлелле
Вĕре-вĕре йараççĕ.

Атăл çыран хĕрне те
Пырса пăхса тăраççĕ,
Атăлпала пăрахут
Килнисене кураççĕ.

Çамрăккисем анђах мар,
Ваттисем те тухаççĕ,
Хăшĕ ытараймасăр
Тĕкĕрпелех пăхаççĕ.

Унтан кино курмашкăн
Кĕпĕрленсе кĕреççĕ,
Арттисĕсем выљаса,
Кино илем кӳреççĕ,

Хӑшӗ сӑра лапкинҗе
Пӑртак ӗҫсе хӗреҫҫӗ,
Ытти урӑ ҫынсенҗен
Паттӑртарах ҫӳреҫҫӗ.
Ех пуљварӗ-пуљварӗ,
Тем те тума пултарӗ,
Астумасӑр ҫӳресен,
Такама та култарӗ.
Сыхланарах ӗҫмесен
Ӗҫкӗ җасах ултаӗ,
Темле ӑслӑ ҫынна та
Ӗҫне тума муталӗ.

* *
*

Шупашкарӑн ҫумӗнҗе
Атӑл выртать ҫутӑлса,
Таҫти-таҫти халӑхпа
Паллашмашкӑн ҫул пулса.
Ех Атӑлӗ, Атӑлӗ!
Мӗн җухлӗ шыв йухатьши?
Ҫавӑн җухлӗ шыв унӑн
Ӑҫтан кӑна тухатьши?
Ӗҫҫыннисен йунне вӑл
Хӑшин җухлӗ ӗҫнӗши?
Ех, Шупашкар, Шупашкар!..
Есӗ мӗн-мӗн тӳсменши?
Ак Атӑлпа анатран
Шур пӑрахут хӑпарать,
Тӑрупинҗен хӑрӑм пек
Хура тӗтӗм кӑларать,

Шупашкара сассипе
Йанраттарса çех йарат̆,
Ђăш-ђаш! ђăш-ђаш! пашкăрат̆,
Тут-тут-тут-тут!.. çухăрат̆,
Шупашкарăн халăхне,
Атăл хĕрне йăхăрат̆.

  Вăйлă тăвăл тухнă пек,
Атăлта хум хускалат̆,
Пристăнре халăхĕ
Урлă-пирлĕ ђупкалат̆.

  Кĕмĕл тĕслĕ хумĕсем
Ик йенелле ђупаççĕ,
Çыр хĕррине çиленсе
Ђăт-ђат! пырса çапаççĕ.

  Хĕрарăмсем васкаса
Апат-çимĕç йăтаççĕ:
Ак, манне ил!.. Манне ил!..
Тийе тийех сутаççĕ.

  Тата Атăл çийĕнђе,
Вĕт-шак кимĕсемпеле,
Ватти-вĕтти мĕнĕпех,
Ир тытăнса кунĕпех,
Каллĕ-маллĕ ишеççĕ,
Уçă сывлăш ĕçеççĕ,

  Йуррине те йурлаççĕ,
Купăсне те калаççĕ,
Пĕрпĕринђен ăмăртса,
Каçа-каçа кайаççĕ.

Киммисене ушкăнпе
Харăс-харăс туртаççĕ,
Хĕвелпепе хĕртĕнсе
Хăйăр çинђе выртаççĕ.

Аккулă пек Атăла
Çурса çӳрет маттурки:
Пĕђĕк кимсен хушшинђе
Пуринђен те маттурри.

Хăй пĕђĕкçĕ пулин те
Темĕн ђухлĕ сĕтĕрет,
Йăрăлтатса çӳресе
Атăл илемне кӳрет.

Етем тени пит ђаплă
Тем те тума пултарать,
Хăйĕн ђапне-хăватне
Пĕтĕм çĕре тултарать.

Йерипелен пурне те,
Çĕнтернĕçем çĕнтерет,
Вутне, шывне, сывлăшне,
Парăнтарса çитерет,
Усал-тискер йĕркепе,
Пĕрне пĕри пĕтерет.

Атăл тепĕр йенĕпе,
Вĕçсĕр-хĕрсĕр вăрманĕ,
Шупашкара хăвăртах
Шăнса вилме вăл памĕ.

Тата симĕс пустав пек
Атăл тăрăх улăхĕ,

Тинĕс пекех сарăлат
Çуркунне шыв тулăхĕ.
  Кунĕн-çĕрĕн ђăр-ђăр-ђăр!
Ђăвăл-ђăвăл! улăхра,
Çĕлен анђах шăтăкра
Тĕттĕм çĕрте хурлăхра.
  Çутă çĕре тухсассăн
Пуçне çапса ватаççĕ,
Патаксемпе пат та пат:
Икке-виççе татаççĕ.
  Унта тата урăх та
Питĕ нумай улăхра:
Йалтăр-йалтăр кўллисем,
Шăмпăр-шампăр пуллисем.
Кăркка пекех карăкĕ,
Кăвапаран курăкĕ,
Шутне пĕлми пуйанлăх,
Çĕрте çĕрет торăфĕ,
Йăвăç-курăк ватăлса,
Çĕрсе пулнă турăхĕ.
Унпа ђăваш халăхĕ
Усă курма тăрăшĕ,
Хапрăк-савăт тума та
Вăл пит хытă пулăшĕ.
  Ех, пурлăхĕ-пурлăхĕ!
Кăпиталăн хурлăхĕ...
Хăçан пулса пĕтĕнши...
Ĕççыннисен ырлăхĕ?
Тĕрлĕ-тĕрлĕ ўнерсем!

Ђасах хăват илĕçĕ,
Тĕрлĕ-мĕрлĕ майсемпе,
Пурлăх тума пĕлĕçĕ.

Китайĕ те, йаппуђ те,
Шупашкара килĕçĕ,
Маťйарĕ те, нимĕç те,
Вĕçсе килсе ўкĕçĕ.
Акăлђанпа хрантсусĕ
Ун хăватне сисĕçĕ,
Тĕрĕксемпе малашне
Пĕлĕт пекех ўсеççĕ.
Авалхи пек тулашмĕç!..
Хăйсем камне пĕлеççĕ,
Пĕтĕм тĕнђе ĕççынни,
Пĕр тăван пек пулĕçĕ.

Кăпитала çĕмĕрме
Харăслатса хускалĕç,
Сывлăшра та, шывра та
Урлă-пирлĕ кускалĕç.

Ĕçхалăхĕн ирĕкне
Çирĕп тытса тăрĕçĕ,
Çавăн ђухне тин вара
Хăйсем камне курĕçĕ.

* * *

Шавлаť, кĕрлет Шупашкар!..
Çĕн пурàнăç тăвасшăн,
Ĕçхалăхĕн ирĕкпе,
Ĕçлет ĕçне хавассăн.

Ђухӑн ђӑваш халӑхӗн
Пурӑнӑçне йусасшӑн,
Пуçлӑхӗсем çӳреççӗ,
Ахаљ çын пек йӑвашшӑн.
Кайа йулнӑ ђӑвашшӑн,
Çут пурӑнӑç тӑвасшӑн.
Савӑн, савӑн, Шупашкар!..
Атӑл çинђи Ђӑваш Пӑлхар!
Пӗтӗм тӗнђе ӗççынни
Сана пӗле пуçларӗ:
Савӑн, ђӑваш халӑхӗ!..
Атӑл ђаплӑ Пӑлхарӗ,
Тахçан авал хунанӑ
Тӗрӗксемпе хун йӑхӗ,
Çӗр çийӗнђи малтанхи
Ђаплӑ Шумер халӑхӗ.
Çиђӗ пин çул авалах,
Пулнӑ санӑн çырӑву,
Пӗтӗм тӗнђе халӑхне,
Паллӑ пулнӑ ӑрӑву.

1926-мӗш çул, Шупашкар

# Çармăсанпа Хăнтăрçа.

## I. Çарăмсан.

Çарăмсана кам ăмсанмĕ,
Унăн ђаплă улăхне!
Тем ђул парат̆ ырлăхне,
Çарăмсан çинђи халăхне.

Улăхĕнђен килес килмест,
Çĕршывĕсем типсессĕн;
Ырлăхĕсем пĕлĕнеççĕ*).
Çимĕк кунсем çитсессĕн.

Симĕс пустав халат пек,
Йешĕл тумтир тăхăнат̆.
Ырлăхĕсем тĕрлĕрен
Çарăмсан тăрăх пухăнат̆.

Ђеђексемпе илемленет,
Пур ђĕрĕ ђун киленет,
Пĕтĕм çĕршыв илемĕ
Çимĕк çитсен пĕлĕнет.

Хĕвелпеле вăйă выљаççĕ
Çарăмсанра пуллисем,
Ђеђексемпе савăнаççĕ
Улăхсенђе кўллисем.

Кайăксем те савăнаççĕ,
Пĕрпĕринпе пĕрлешсе
Çарăмсан çинђе ыр кураççĕ,
Тĕрлĕ халăх мирлешсе.

---

*) Пĕлĕнеççĕ— сисĕнеççĕ, çын вĕсене пĕлекен пулат̆.

Хур-кăвакалсем савăнаççĕ
Ђĕпписемпеле,
Ишсе-ђăмса çăвăнаççĕ
Çарăмсан шывпе.

Ывăл-хĕрсем ыталанса
Вăйăсем выљаççĕ,
Çемçе сассисемпеле
Йăвашшăн кулаççĕ.

Шăрантараççĕ йуррисене
Улăхĕсенђе,
Йăпатаççĕ пĕрне-пĕри
Çамрăклăхĕнђе.

Ђеђек пăхса тĕр тăваççĕ
Сарă хĕрĕсем,
Хĕвелпеле йалтăраççĕ
Кĕмĕл çĕррисем.

Çăвăнаççĕ, тасалаççĕ
Çарăмсанпа шывĕпе,
Анса-хăпарса киленеççĕ
Çўлĕ тăвĕпе.

Çарăмсанăн тăрăшĕпех
Ђеђек ўсет тĕрлĕрен,
Пурте вĕсем пулаççĕ,
Тĕнђе илем кирлĕрен.

Ăçтан килђĕ ку ырлăх
Пĕтĕм Çарăмсан тăрăшне,
Çил хумхатаť тинĕс пек
Пĕкĕ çўллĕш ырашне.

Курăк çинђе сывлăмĕсем
Çĕмĕрт сапакисем пек,
Хĕртсе хĕвел пăхнă кун та.
Кăнтăрласăр типмеççĕ.

Лăс пек çăваť çăмрисем
Тырра-пулма ўстерме...
Пур ђĕрђуна ĕçтерме.

Лăпкă ăшă çилĕсем,
Лекет пите çу пекех,
Çарăмсан ырлăхĕ
Пуриншĕн те ту пекех.

Тĕтре çўрет ђасђасах,
Кăмписене кăлараť,
Çимĕк кунсем çитсессĕн,
Пур ырлăхсем палăраť.

Çамрăкĕсем улăха
Уйав тума тухаççĕ,
Савăннипе пĕрпĕрне
Ăшă куçпа пăхаççĕ.

Алла-аллăн тытăнса,
Сике-сике йурлаççĕ,
Тĕрлĕрен вăй выђаса
Кăмăлсене ырлаççĕ.

Пĕрне пĕри ыталаса
Пыл ĕçмелле выђаççĕ.
Вăйăпалах çимĕк кунсем
Хыçалалла йулаççĕ.

Шур кĕписем çийĕнђе
Патпађĕсем ђеђекӗпек.
Çамрăкӗсассисемпеле
Ђăвăлтатаççĕ ђĕкесӗпек.

Кăкрисене ăваççĕ,
Пуçĕсене ухаççĕ.
Вăййисене курасшăн
Ваттисем те тухаççĕ.

Тухйа-хушпу айĕнђе
Хĕрарăмсен пуçĕсем,
Вĕсен çинђен каймаççĕ
Кађђисенĕн куçĕсем.

Ăçтан тупса çитереççĕ
Йурăсемпе сăвăсем!
Пĕлĕт пекех курăнаççĕ
Çарăмсанăн тăвĕсем.

Кађђисенĕн кĕписем те
Арки вĕçсем ђĕнтĕрлĕ.
Ех, çимĕкĕн илемĕсем
Курăнаççĕ пин тĕрлĕ!

Пĕрне пĕри ђуптăваççĕ
Çемçе тутисемпеле,
Темĕн тĕрлех савăнаççĕ
Çимĕк кунĕсемпеле!

Ăсатаççĕ уйавне
Ватти-вĕтти мĕнĕпех,
Ăсанĕçĕ хĕрхенсе
Килес çулхи кунĕпех.

Йалсем тавра çаврăнаççĕ
Харăс утса йурласа,
Уйава тухман хĕрсене
Тăрăхласа хурласа.

Шăнкăрав пек сассисем
Йанра йулаť йал çине,
Пушмак-атă йĕрĕсем
Тăрса йулаť çул çине.

Иртрĕ уйав ĕмĕрĕ,
Ђас çаврăнмĕ кайалла,
Улăхсенђен çамрăксем
Саланђĕçĕ йалалла.

Ах мăнтарăн уйавĕ
Çулталăксăр таврăнмĕ,
Нумай халсем иртмесĕр
Çĕрĕн тавра çаврăнмĕ!

Выљантарђĕ вăййипе,
Илештерђĕ пĕрлĕрне,
Халĕ ĕнтĕ астăвĕç
Пурте савса хăй хирне.

Пуçтарăнса кайĕçĕ
Пуртă йăтса вăрмана,
Йеррипеле утĕçĕ
Çавасемпе çырмана.

Ушкăн-ушкăн кайĕçĕ
Çырла-çĕмĕрт татмашкăн.
Савăнăçлă кунсенђе
Пулĕç çуртсен умсенђе.

Çĕнĕ милкĕ çыхĕçĕ
Çанçурăмне çумашкăн,
Пурте хĕрсе тытăнĕç
Хăйсен ĕçне тумашкăн.
Çуртыррисем çийĕнђен
Пукрисене суйлĕçĕ,
Пурте хăй тырпуллине
Тасатмашкăн уйлĕçĕ.
Улăхсенђе, варсенђе
Утăсене çулĕçĕ,
Пăри-тулă çиййĕнђен
Пиçенсене çăлĕçĕ.
Йеррипе ĕçле-ĕçлех
Тă тăнланĕç аллисем.
Темĕн тума ваттисем
Тĕреклĕ пулнă авалхисем.
Хăва хушшийĕсенђе
Хурлăхансем хуралĕ,
Йатне пĕлсе пĕтерес çук
Хурт-кăпшанкă çуралĕ.
Çерçи пуç пек сырлисем
Курăкпала йавăнĕç,
Савăђĕсем çине пăхса
Ађисем те савăнĕç.
Çĕмĕрт сапакисем пулĕç
Тухйа йарапийĕ пек,
Палансемпе ђыйасем
Мерђен сапакийĕ пек.
Шăналăксем карĕçĕ
Шăна-пăван кĕресрен,

Пурте савӑнса ёҫлёҫё
Пёрне-пёри тименрен.
Пахҕисенҕе ӳсёҫё
Ҫимёҫёсем тёрлёрен,
Пурте вёсем пулнӑ-мён
Пурӑнӑҫа кирлёрен.
Сысна ҫурисем пекех
Хӑйарёсем ӳсёҫё,
Сарӑ ҫу пек саралса
Тынёсем те пиҫёҫё.
Тӑрна куҫ пек шывёсем
Куҫа шартса йарёҫё,
Ҫарӑмсанӑн улӑхсем
Хисепсёр ырлӑх парёҫё.
Тыррисемпе пуллисем
Тулса тӑраҭ тусана,
Ёнисем те сётпе пёрле
Тумлатаҫҫё ҫу сана.
Йалёсем те хула пек:
Ҫӳре-ҫӳре ывӑнӑн,
Йепле кӑмӑл ан савӑнтӑр
Ҫарӑмсан ҫинҕи ывӑлӑн?
Йармӑрккипе пасарсенҕе
Пӑтӑ пекех ҫын вёрет
Вырӑс-тутар, ҕӑваш-мӑкшӑ
Пёр тӑван пекех ҫӳрет.
Вуншар ҕуллӑ арманёсем
Аслати пек кёрлеҫҫё,
Ҫарӑмсанӑн ырлӑхпе
Хуйхисем те сирёлеҫҫё.

## Хӑнтӑрҫа.

Ҫарӑмсанпа йунашар
Ҫавӑн пекех илемлӗ,
Кукӑр-макӑр кукрӑлса,
Нумай йалсен хушшипе
    Йухаҭ тата Хӑнтӑрҫа
    Кӗленҍе пек ҫутӑлса,
    Нӳхрепсене тулаҫҫӗ
    Курӑкӗсем ҫу пулса.
Пахҍисенҍе улмапа
Арпуссем те пиҫеҫҫӗ,
Ӗҫкисенҍе сӑрисем
Кӑпӑкланса йӳҫеҫҫӗ,
    Йухаҭ Самар йенелле,
    Аннӑҫемӗн сарӑлаҭ.
    Хӑвалӑхра хӑмлисем
    Ӗне ҍӗҍҍи пек сарӑлаҭ.
Кунта нимӗҍҍисем те
Киленеҫҫӗ ҫӗрсемпе,
. . . . . . . . . . . . .
Савӑнаҫҫӗ килсемпе.
    Ывӑнмасӑр ӗҫлеҫҫӗ
    Хирӗсенҍе, килсенҍе,
    Пӑхма хал ҫук ут-тумсем,
    Ырлӑхпа иртет кунсем.
Ҫак икӗ шыв тӑрӑшшӗнҍе
Нумай йалсен хушшинҍе,
Ҍийе ӗшни тӗлӗнҍе
Ҍийешне те савӑнаҭ.

Ђиркӳ тăрри таçтанах
Йăлтăртатса курăнаҭ;
Ђăвашсемпе вырăссем
Ђийешнерте пурăнаҭ.

Çарăмсана урлă каçаҭ
Ђийешненĕн хĕрĕсем,
Хăнтăрçи хĕрне те çитет
Çавă йалăн çĕрĕсем.

Усрав вăрман ту çинђе
Тĕрлĕ курăк ӳстерет,
Сывлăх паракан шывне
Çарăмсанĕ ĕçтерет.

Улăхĕсен утипе
Выђăхĕсем выђаççĕ.
Тĕрлĕ тырă-пулăпа
Ирĕк хирсем тулаççĕ.

Ђийешненĕн ырлăхне
Ађисем те выђаççĕ,
Аслă урам варринђе
Савăнаççĕ, кулаççĕ.

Вырăс, ђăваш ађисем
Пĕрлешеççĕ йерипе
Ырлăхĕсем нумайран
Ђийешненĕн хĕррипе,

Çарăмсанăн шывĕ пек
Йухса иртет пурăнăç.
Хăнтăрçанăн кукри пек
Темиçене пăрăнăç.

Иртет ырă кунĕсем
Ђас çухалан тĕттĕм пек.
Ырлăхĕсем пулсассăн
Ђăвашсем те етем пек.

Çĕре лекнĕ Çарăмсанăн
Сурăхĕсен хўрисем,
Хуран хăрăм пек хура
Çĕрĕсемпе хирĕсем.

Ыр уђĕсем кĕçенеççĕ
Утă-сĕлĕ çинĕрен,
Йуррисене кăлараççĕ
Праçниксерен çĕнĕрен.

Хĕлĕпеле турттараççĕ
Улăхсенђен утăсем,
Ађисене тĕрек парай
Ашлă-çулă пăтăсем.

Хунĕ-хунемĕшсем те
Савăнаççĕ кĕрўшсемпе,
Хулăнсене илеççĕ
Хĕрĕсемшĕн çĕрĕшсемпе.

Йăвăç пўртсен выраннe
Кирпĕђĕрен лартаççĕ,
Пўрт-çурт çинђи улăмне
Тимĕрпелен тартаççĕ.

Тĕрлĕ тырă капансемпе
Анкартисем тулаççĕ,
Çарăмсанăн ырлăхпе
Пурте тутă пулаççĕ.

Çарăмсанпа Хăнтăрçа
Пĕтермеççĕ çунтарса,
Шăвараççĕ халăхсене
Ырлăхпе савăнтарса.
Кăнтăрлана пăхаççĕ,
Атăла тухаççĕ,
Ђул хуласен патĕнђен
Хвалын тинĕсе йухаççĕ.

Хусан, 1915-мĕш çул.

---

## Ĕç çийĕ.

I.

Хĕвел хытă хĕртнипе,
Ђас-ђас çăмăр çунипе,
Ирлĕ каçлă йĕпйĕпе,
Сывлăм вăйлă ўкнипе.
Вăрманта та, уйра та,
Пурте пулса çитнипе:
Ак Çарăмсан тăршшĕнђе
Пулса çитрĕç тырăсем:
Сарă çу пек саралђĕç
Ырашĕсем, туллисем,
Шурă мерђен шăрçа пек
Шуралђĕçĕ пăрисем,
Кĕççеленсе ўкрĕçĕ
Мелке пуçлă сĕллисем,
Тинĕс хум пек хумхатаĭ
Тырра-пулла çилĕсем.

Ђăпарланса çитеççĕ
Хуратулсем, вирĕсем:
Пуйса çитет ун ђухне
Пирĕн йалсен хирĕсем
Акă ун ђух васкаса
Питĕ хытă савăнса
Йалти çынсем пĕтĕмпех
Саланаççĕ хирсене.
Тĕкĕр-текĕр ватсем çеç
Тăрса йулаť килсене,
Ађасем те ун ђухне
Киле тăрса йулмаççĕ,
Уйав тума, выљама
Вăхăђĕсем пулмаççĕ,
Ĕççĕр ђупса çўресе
Ашкăнмаççĕ, кулмаççĕ.
Хăйсен килйышсемпеле
Пурте хире кайаççĕ.
Тырă-пулă умĕнђе
Пуçĕсене тайаççĕ.
Хĕртсе хĕвел пăхнă ђух
Хĕрсе тырă выраççĕ,
Ывăççене вĕлт те вĕлт!
Çавра-çавра хураççĕ,
Ўпне ўксе васкаса
Кĕлтисене çыхаççĕ.
Тусанпала тарĕсем
Пылђăкланса йухаççĕ,
Пĕрпĕринпе тавлашса

Ӑмӑртланса ĕçлеççĕ,
Ашамӑшсен сӑмахне
Мĕн хушнине итлеççĕ.
Йепле йӑвӑр пулсан та
Пурĕпĕрех тӳсеççĕ,
Çамрӑк ђухнех тырпулӑ
Ĕçпе пиççе ӳсеççĕ.
Ађаш питçӑмартисем
Хĕвелпеле пиçеççĕ,
Çурхахланса çӳпçӳхе
Хӑпа-хӑпа ӳкеççĕ.
Ӑшĕсем пит çуннипе
Ђасђасах шыв ĕçеççĕ,
Тӑр кӑнтӑрла тĕлĕнђе
Апат çиме вĕçеççĕ.
Ĕçсе-çисе тӑрансан
Пӑртак выртса канаççĕ,
Алурисем кӑнаççĕ,
Хӑйсем тӑна кайаççĕ.
Унтан татах йерипен
Тырӑ вырма утаççĕ;
Карталанса тӑраççĕ,
Каллех çурла тытаççĕ.
— Умĕсенђе çурлисем
Вĕлтĕр-вĕлтĕр выђаççĕ.
Хыçĕсенђе кĕлтисем,
Тĕм çине тĕм пулаççĕ.
Пĕрер ывӑç каснипех
Çаратаççĕ хирсене;

Ун ђух уйав шухăш çук
Кађђăсене, хĕрсене.
Шурăмпуçпех тăраççĕ,
Çĕрĕн-кунĕн* выраççĕ.
Пĕр ĕç хыççăн тепĕр ĕç
Сиксе тухсах пыраççĕ.
Çăмăр киле пуçласан
Урлă-пирлĕ пăхаççĕ,
Çурлисене пăрахса
Ђупса кĕлте пухаççĕ.
Тырă вырса пĕтерђĕç,
Çурлисене хуђĕçĕ,
Анђах питĕ хăвăртах
Пĕтес çук халђ, ун ĕçĕ.
Пĕтĕм хирте çĕмелпе
Шăкăр сурат курăнаť:—
Унган вара халăхĕ
Вĕсен йенне пăрăнаť.
Çŭлелле май пĕр майран
Кĕлти вĕлт-вĕлт ыткăнаť,
Пĕлĕт йухнă пек йухаť,
Тырă йала пухăнаť.
Уйар ђухне çул çинђе
Тŭсме хал çук тусанĕ.
Нумай пусса куççассăн
Пирĕн хресђен йусанĕ.
Хресђен сынни çĕр çинђе
Ĕмĕрех çĕр ђакалаť,

Выртан каска мăкланаť,
Çӳрен каска йакалаť.

II.

Хирти тырă-пулăсем
Пурте йала кĕђĕçĕ,
Ирĕкленсе йурласа
Çӳрет хирте кĕтӳçĕ.
Çăмăр çăваť шăвараť,
Йурри тем пек йанăраť,
Çĕтĕк-çатăк витĕнет,
Сасси мĕскĕн илтĕнет.
Симĕс вăрман сaралаť,
Йăвăç çулçи çаралаť,
Пĕтĕм хире çăлтăр пек
Выђăх-ђĕрлĕх саланаť.
Тăппи-таппи тăпађђи
Тăпăртатса çеç тăраť,
Кађђă çапаť çĕкленсе,
Хăп-хап! кăçкăрса пыраť,
Хăшĕ кĕрхи сухине
Шăй шăхăрса сухалаť,
Унта-кунта тăрактăр,
Тăрăлтатаť, çухăраť.
Вăл таврара авалтан
Тырă ĕçĕ хăватлă:
Анкартине тырпулă
Кĕрт хӳнĕ пек кĕртеççĕ,

Хěсепне те пěлес çук
Ханша туса çěртеççě.
Сисмен хутран, сасартăк,
Пăлук сиксе тухсанах,
Йăвăç суха-сÿресем
Пěтсе ларнă тахçанах.
Унта çурхи сухана
Сухалаççě кěркунне,
Сÿрепе çех акаççě
Çуртырийе çуркунне.
Хир илемě çухалђě,
Салхуланђě вăрман та;
Халăх çÿрет кăткă пек
Урлă пирлě арманта:
Ниçта шăнăçтарма çук
Пырса тулнă урапа,
Тěрлě йалтан пухăннă
Тěрлě тěслě тырăпа.
Йěтěнсене сарђěçě,
Кантăрсене путарђěç,
Пахђасенђи тěрлěрен
Çимěçсене пуçтарђěç,
Çăмěсене таптарђěç,
Тăлисене пустарђěç,
Ваљтсăвккăра тем ђухлě
Шурă çăнăх йухтарђěç,
Тěрлě апат-çимěçсем
Хатěрленсе çитрěçě,
Ăшă кунсем хăраса

Ťаçта кайса çĕтрĕçĕ,
Акă ђăваш йалсенђс
Хускалђĕçĕ ĕçкĕсем;
Хăçан пĕтсе ларĕçши
Ун пек ĕçкĕ ĕçнисем?
Йупасем те тăваççĕ,
Ђўклеме те ђўклеççĕ;
Хăшне пылђăк çиЙĕнђен
Иккĕн виççĕн çĕклеççĕ.
Пĕр йалтине пĕтерсен
Тепĕр йала кайаççĕ,
Хăшин айак шăммине,
Хăшин хулне хуçаççĕ.
Шурă ерех ĕçменне
Хĕрлĕ ерех параççĕ,
Тĕрлĕ-мĕрлĕ йурăсем
Йанраттарса йараççĕ.
Сĕтеллисем çиЙĕнђе
Апат-çимĕç ђăп тулли,
Хăшĕ пысăк ђыс кураť,—
Хăшĕ пулаť çын кулли.
Ех, Çарăмсан ырлăхĕ!
Тем те тума пултараť:
Хăшне параť ырăлăх,
Хăшне çĕре путараť.

Шупашкар, 1927-мĕш çул.

## Çĕрпӳ уйесĕнђе çӳрени.

Шупашкартан тухсанах пире хирĕç йăлăма (Атăлăн тепĕр йенне, улăха) утă çулма кайакан халăх Шупашкар çывăхĕнђи ђăваш йалĕсенђен пăр пек йуха пуçларĕ. Çависене пуртă аври çумне хурса, кив-кирĕк çĕтĕкĕсемпе, йе тăлăпа ђăркаса çыхнă. Ăлавĕсем çине темĕн ђухлĕ кĕрепле, сенĕк хунă. Çанталă кпитĕ уйар, çул çинђе куçа уçма çук тусан. Ырашсем пулса çитеççĕ. Çуртырри пуçаххисен çумĕнђе шăрка йараписем, шăрçа йарапи пек сапсар курăнса, вĕлтĕртетсе тăраççĕ. Кăшт çил варкăштарнипе те, тырăсем пĕрре пĕр май, тепре тепĕр май пуççене силлесе, хумханса, пĕрне-пĕр тинĕс хумĕ пек хăваласа кайаççĕ. Хура пусăри хăш пĕр сухаламан анасем çинђе, кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе тислĕк куписем курăнса выртаççĕ.

Шупашкартан Апаша çитиђђен, 18 çухрăм хушши, Çĕпĕрти йалсен хушши пĕк пер йал та тӳрĕ килмерĕ. Йалсем пурте çулăн икĕ йенĕпе çырмасемпе тарăн варсен таврашсенђе курăнса йулаççĕ.

Апаш çӳлĕ илемлĕ вырăнта ларать. Йалăн пĕр йенĕпе пĕр пĕђĕк çырма, çамрăк, илемлĕ, лăпсăркка йăмрасен айĕнђен вăрман ăшĕнђен йухнă пек кукăркаланса, шăнкăртатса йухса выртать. Ту питĕнђе туйралăх, йалне перĕнсех тăрать. Йала кĕнĕ çĕрте çӳлĕ ту айĕнђен çăл сиксе тухса, валак тăрăх йухса пысăк йуман кункăра çине тулса, çырманалла кĕмĕл пек çутăлса, шавласа, йăлтăртатса йухса анать. Çăлтан шыв илсе, картлă кĕвентепе йăтса

сукмак тăрăх çӳлелле хăпаракан хĕрарăмсем пĕлĕт çине улăхнă пек курăнаççĕ.

Пирĕн лаша, çулпа ђипер утса пынă çĕртенех, çав çăл патне сĕтĕрсе кĕђĕ те, кункăрари шыв çине пуçне пырса ђиксе, ĕмĕрне курман пек ĕçе пуçларĕ. Лаша хуçи нумай ĕçтерес мар тесе, вăрçа-вăрçа лашине туртаť. Лаши пуçне пăра-пăра, çăварне шыв çине персе ђикет.

Йалне кĕнĕ çĕрте, уçă, илемлĕ выранта, ту çамкинђе, шкул йал илемне кӳрсе тăраť. Ун патĕнђен инçе мар, халăх вăйне çисе, сийен кӳрсе тăракан ђиркĕвĕ йăлтăртатса лараť. Вĕсене курсан епĕ:— пĕр илемлĕ, пуйан йал виттĕр тухатăп пулĕ тесе пыратăп. Анђах йал урлă каçнă ђух, лайăх çурт питĕ сахал курăнђĕ.

Апашран иртсе тепĕр йала çитнĕ ђухне икĕ 10—12 çулхи хĕрађа, пĕринђен пĕри ăмăртмалла ђупса пырса, пире укăљђа (униђе) хапхи уçса кӳртрĕç. Хăйсем пирĕн çине питĕ тинкерсе пăхаççĕ. Иртсе кайсан та çапла хытă пăхнăран, икĕ пĕђĕк укçа пăрахса хăвартăм та, тем пек саванса, кулкаласа ђупса пырса илђĕçĕ.

Унтан Кĕçтимĕр йалне çитрĕмĕр. Ман лавçă пĕр хăй пĕлнĕ вăйлă çурта илсе кĕрсе, мана Çĕрпӳве леçме хăй вырăнне тытрĕ те, хăй пайан киле çитесђĕ тесе, кайалла Шупашкара çаврăнса карĕ. Епĕ кĕрсе йулнă çуртра, пĕтĕмпех шултăра хĕрарăм, Икĕ çитĕннĕ хĕр. Ыйтса пĕлмесен, кинне, хĕрне арăмне пĕлес çук. Унăн упăшки салтакра вилнĕ.

Ватăлса кăвакарнă карђăкпа старик те пур. Мана Çĕрпӳве леçме лайăх тимĕрлĕ çатан урапа кӳлђĕçĕ. Лаши те лайăх. Ларкăç çине кинĕ улăхса ларђĕ. Мана хама пысăка хунă пек туйăнаť; ан лар унта, ман çума лар, тесен те,—ман çума лармарĕ. Çуртĕнђен тухсанах, пĕр 6—7 çулхи ывăл ађа ђупса тухрĕ те, пирĕн хыçран, еп те пырап, тесе пĕтĕм вăйран çухăрса макăра пуçларĕ. Мĕнле ађа вăл? Кам ађи? терĕм те, ларкăç çинђи арăм, ман ађа, терĕ. Ху ађу пулсан ма лартмастăн? Çĕрпӳ инçе мар вĕт! ђар лашана, ларт, тесен лашине ђарђĕ те, ађи ђупса çитсе ларђĕ. Хурланса, мĕн пур вăйпа çухăрса, макăрса ăшђикки кĕвелсе, тăвăлса çитнĕскер, çамрăк, вут пек вĕри йун çанçурăмĕ тăрăх ђупса çӳренипе, ађа амăшне темĕн пĕр усал сăмахсем калаť. Амăшĕ: асту сана! санпала тем намăса кĕрсе ӳкĕн. Акă пушă аврипе çăварна ђикĕп, ђарăн луђђă! тет.

Акă Çĕрпӳ хули те курăна пуçларĕ. Çĕрпӳ Мăн Çавалпа Кĕçĕн Çавал шывĕсем пĕр çĕре хутшăннă çĕрте, çатма пек тикĕс вырăнта лараť. Хулан пĕр вĕçĕнђе мăнастир, тепĕр вĕçĕнђе тĕрме, тата вăрман пек курăнса тăракан хула сађĕпе пасар таврашĕнђи çӳлĕрех çуртсем Çĕрпĕве айакранах хула пек кăтартса тăраççĕ. Мăнастирне йĕритаврах çӳлĕ ђул хӳмепе çавăрнă. Креппĕç пекех курăнса тăраť. Те манашкисене вăрласа кайасран хăранă, те ашкăннисене никам та ан куртăр тенĕ. Тĕрми те ça-

вăн йеверлĕрех, мăнастирпе тĕрми тен пĕтĕм хули хакне ӳкнĕ пуљ.

Çĕрпӳ таврашĕнђе вăрман çителĕклĕ мар. Унти ђăваш йалĕсен, пăртак та пулсан, хăйсен усрав вăрманĕсем, туйралăхсем пур. Çавăн пек усрав вăрман пуррисем карта-хура тума та пăртак каскалаççĕ, пушăтшăн та питех аптăраса каймаççĕ, вутшăн та пăртак усă кураççĕ. Хирте выљăх апађĕ çук ђухне, йе усал çанталăксенђе, выљăхсене те унта усраççĕ. Çулĕ-çулĕпе унта вăрман улмипе мăйăр та, çырла-çĕмĕрт те нумай пулаť. Вăрман улми пулнă çул, хĕлле ăна сивĕ çĕрте кĕлетсенђе усраççĕ. Вăхăђ-вăхăђĕпе пӳрте илсе кĕрсе, ăшăтса çийеççĕ. Апла тусан, пылланса, йӳççи пĕтсе, çиме тутлă пулаť. Вăрман улми Ђăваш Респуплĕкĕнђи пек нумай пулнине епĕ урăх çĕрте ниçта та курман. Тен панулми питĕ ăнса пуласси те çавăнтанах килет пуљ. Пан улми пулнă çул унта крепенки 2—3 пус анђах пулаť. Сутса та çисе те пĕтереймеççĕ. Типĕтеççĕ те, йӳçĕтеççĕ те, çывăхри хуласене те нумай сутаççĕ. Çĕпĕре те вакунĕ-вакунĕпе ăсатаççĕ. Пасарсене унта шăннă панулми те, шăнманни те хĕлĕпех кăлараççĕ. Кĕркунне йалсенђе аван улмасенех 70—80 пуса пăтне сутаççĕ. Çав улмасенех çуркунне, çавăнти хуласенђех кĕрепенкине 20—25 пуса сутаççе. Ђăваш улмипе сутуçăсем мĕн ђухлĕ тупăш курнине шутне пĕлме те хĕн.

Çĕрпӳрен тухса 4—5 çухрăм пек кайсассăн Катек йатлă ђăваш йалĕ патне çитрĕмĕр. Катекĕн

пěр йенне пěр пěђěк вăрман перěнсех тăрат̆. Тепěр йенěпе Çавал улăхě тинěс пек сарăлса выртни курăнат̆. Аслă çул хěрринђех пěр пěђěк çăл сиксе тухса, çула тăрăх çěлен пек пăркаланса, шăнкăртатса йухса выртат̆. Çулпала Çěрпӳве иртекен пěр ушкăн хěрарăм, çак çăл патне ђарăнђěç те: ěçес килмесен те çак çăл патне ђарăнса, пăртак та пулсан астивмесěр иртсе каймалла мар вара.—Ех çăлě, çăлě! Çул çӳрекенсемшěнех пулнă пулě, теççě.

Унтан вăрмана кěтěмěр. Акă уçланкăсенђе вěтшак ађа-пăђасем ђупса çӳресе çырла пуçтараççě.

Аслă çулпа иртсе çӳрекенсене: çырла илетри, тесе кăçкăраççě. Çавăнтах çырлисене сутса йарса, укçисем çине пăхса савăнса, татах çырла шырама тытăнаççě.

---

Вăрман урлă каççан, уçă тикěс çěртен пыра пуçларăмăр. Таçти айакри йалсен патěнђе, çилармансем вěлтлетсе çаврăнса ларнисем курăнаççě. Унтан Арапуçне çитрěмěр. Вăрман çывăх пулмин те, вăл таврари йалсем нађар мар. Те ђукăн çуђ таврашěнђерен, те йал хавалěпе. Вăрмара çитиђђенех йалсенђе ђарăнса тăма тӳрě килмерě. Йалсен витěр тухнă ђух мěн кирлине ыйтса тěпђесен, пурте Çěрпӳ пасарěнђе илнě експонатсене (йапаласене) кăтартаççě. Çěрпу çывăххипе вěсем çěнě йапалисене те, авалхисене те Çěрпӳ пасарне сутма илсе тухаççě. Арапуçпе Вăрмар йалě иккěш те пысăк, пуйан йалсем, вěсен хушшинђе Вăрмар стантси. Ун пек

çĕрге ĕмĕрех ĕç нумай пулаť. Вĕсемшĕн Хусан та питĕ çывăх, Мускав та инçе мар. Пит аптăранă вăхăтра хăвăртах таçта çитсе ӳкме те май пур. Ђукăн çул таврашĕнђе хĕлĕн-çăвĕн ĕç пĕтмест. Вăйлă тăмансенђе йур тасатса та темĕн ђухлĕ укçа илеççĕ. Вăрмар йалĕ, тарăн варлă çырма çатрасен тăрăшне таçтан таçта тăсăлса, сарăлса ларса пĕтнĕ. Çырмасен кукрисем, пăрăнђăкĕсем урлă татăк-татăк ларнипе темиçе йал пек курăнса тăраť. Йал çуммипе хура пуссах паранкăсем, кантăрсем темĕн ђухлĕ акнă. Пурте лайăх. Йал çывăхĕнђи лайăх навусланă (тирĕс тăкнă) анасене, хура пусă пулсан та, ахаљ вырттармаççĕ. 1905 çулхи револютси вăхăтĕнђе патшалăх Тумине Вăрмар ђăвашĕ Фетăрăв суйланнă. Йепле пурăнаť вăл? тесе ыйтсан: сывă халĕ, лайăх пурăнаť, питĕ ђейе вара, терĕç. Каç пулса килнĕ майĕпе ун патне кĕрсе выртса, патшалăх туминђе мĕн курни-илтнисене, унта пулнă çынпа куçа-куçăн тăрса калаçса выртас та килђĕ. Анђах епĕ пыракан çултан ун çурђĕ инçе пулнипе, урăх çын патне кĕрсе выртмалла пулђĕ. Тем пек пысăк пулсан та, Вăрмар йалĕ пĕтĕмпех панулми сађĕсен ăшне путса, кăтраланса курăнса лараť.

Тепĕр кунне, тул çутăлнă вăхăтра, Кавал йалне Тайреппин Микки патне çитрĕмĕр. Пире хирĕç ун хапхинђен пĕтĕм Кавал йалне йанăраттарса, акăш-макăш йурласа, кĕрлесе, питĕ вăйлă туй тухрĕ. Пуринђен ытла хĕрарăмсем, урапасем çинђе тăрса, аллисене тутăр тытса, сулкала-сулкала, урисене

тапса йурлаççĕ. Пуçĕсене пăркаланипе хушпу миçиххи, сурпан çакки çумĕнђи кĕмĕл укçисем шанкăртатса çех пыраççĕ. Вĕсен сассине пулăш, тата лашисен пĕккисем çумĕнђи шăнкăравсем тем пекех йанăраççĕ. Шурăмпуç килнĕ ђухнехи лайăх, лăпкă сывлăшпа, пĕтĕм Кавал туй тунă пек туйăнаť. Ма çавăн пек ђаплă туйсем ан тутăрха Тайрепин Микки? Ратне вăйлă, йалĕ хула пек, пасарĕ те йалне темĕн ђухлĕ тупăш параť. Вулăсри совет та йалта, хулари пек ђултан тунă икĕ хутлă тем пысăккĕш шкулĕ, таçти йалсенђен пăхсан курăнса параť. Тăванĕсем пурте уйрăлса пĕтсе, ашшĕ пурлăхĕ пĕтĕмпех хăйне йулнă. Панулми сађĕ улпут сађĕ пек, çипуç та лайăх. Малтанхи арăмĕ вилсен, иккĕмĕш арăмне каллех йалта пĕр паллă пуйан хĕрне илнĕ. Çавăнпа та вăл: Пирĕн ратнесем туй тунă ђух çĕр çухрăмри çĕр кисренет, çынсен ăратнисем туй тунă ђух пĕр çухрăмри çĕр те кисренмест,—тесе йурлаť. Анђах вăл туйа, вĕсен ăратни пулса, ыран пĕçерме çăнăхĕ çукки те йернĕ. Вăл та туй тăваť. Вăл та аллисемпе çапкалана-çапкалана йурлаť. Ађисем килте выçăлă-тутăлă лараççĕ. Çапах та вĕсене туй хатĕрĕсене ан çийĕр тесе, хытă хăтăрса, хăратса хăварнă. Хăйсем сике-сике ташласа йурласа туй тăваççĕ. Туй тумтирĕсене çынран ыйтса илнĕ, ыттине çынăнне тăхăннă, вĕсем ларса çÿрекен ут тумĕсем те çынăн. Çапах туй тăваççĕ, çапах савăнаççĕ. Ўсĕр çăварĕсемпе: ма туйран

йулас халӗ? Епӗр çынран катӑким? Çынран йулиђ-ђен муртан йул, теççӗ. Хăйӗн хуралтисем çӗрсе, хăрса кайнă. Пӳрте темиçе тӗлтен тӗрев пенӗ. Пытанса тула тухма вырăн çук. Хăй те кӳршин хуралти хыçне пытанса çех тула тухаҫ. Ађисен çиййӗсем çӗтӗк-çатăк. Нађар апатпа пиђӗсем кăва-карса кайнă. Çапах вăл туй ваљљи сăра тума, салатне, хăмлине, ханша (сăмакун) тума çăнăхне те тупнă. Çавă туй туса пӗтернӗ тăкакпа йе çимел-ли, йе тăхăнмалли илсе парсан, ађисем мӗн ђухлӗ савăнасси çинђен шухăшлама пӗлетши вăл, çукши? Пӗлет вăл. Пӗлсен те ирӗксӗрех кайаҫ. Манăн та çапла ађасене авлантармалла, хӗрсене кађђа па-малла, туйсем тумалла, мана та гăвансем кирлӗ пулӗç, тет. Анђах ађисем ӳссе çитӗнсе авланмалла пулсан кама илмелле халӗ? Лайăх пурăнакан çын хӗрне, хулăн парса, кӗрӗс-мерӗс туй туса илме хăват çитмест. Йе каллех хăйсен пеккине шыра-малла, йе киле кайса кӗрсе, ӗмӗр çын хурри пулса пурăнмалла. Унăн хăвăртах ырă пурăнăç курайас çук. Тăванӗ ăна хăй ывăлӗн туйне ђӗннӗ пулин те, авалтан килекен йăлапа ђӗннӗ. Ђухăн тăванӗ ывăлне авлантарма тытăнсан вăл пулăшмалăх пул-сан та пулăшмаҫ, памаллăх пулсан та памаҫ. Пурте апла пулмасан та, ун пеккисем нумай. Ђухăн çын ађисен асапран хăтăласси пурӗ те пӗр çул анђах.—Вăл, нумайрах вӗренесси—çырăва, йе мӗнле те пулсан усăллă, тупăшлă ӗç ӗçлеме вӗренесси. Ђухăнсене хытă хӗрхенекен, пӗтӗм тӗнђипе те

пĕр патшалăх анђах. Вăл—Совет патшалăхĕ, ĕçхалăхĕн ирĕкĕ. Вăл пуринђен хытă ђухăнсене вĕрентесшĕн тăрăшать. Пĕр вăл анђах ђухăнсен хутне кĕрет. Вăл анђах ђухăнсене ырлăх курма çул тупса парать. Вĕреннĕ ађа ђухăн çын ађи пулсан та, ђухăн çын хĕрне илсен те хур пулмасть. Вĕреннĕ çынна кађђа кайасшăн темле пуйан хĕрĕсем те вутла çунаççĕ.

Туй тухса кайса пĕтрĕ. Çурт хушши лăпланса çитрĕ. Тайрепин Микки пĕр вăхăтлăх килне йулса манран: есĕ ăçтисем? мĕн туса çÿретĕн?—тесе тĕпђеме тытăнђĕ.—„Сирĕн авалхи лайăх тумтирсем (йапаласем) пур теççĕ. Епĕ çавсене илме килтĕм. Мускава йалхуçайстви выставккине йарас тетпĕр вĕсене“, терĕм.—Йурĕ, кайран калаçапăр. Анне, есĕр ку çынна хăна тăвăр халĕ. Епĕ туй патне каймаваскатăп, терĕ те, хăй тухса карĕ; мана амăшĕ хăна турĕ. Унтан пĕр вăхăт Кавала тухса çÿрерĕм. Пăртак експонатсем те тупса килтĕм. Кăнтăрла умĕн Тайрепин Миккипе арăмĕ те таврăнђĕçĕ. Ашшĕне: сутса йарас йапаласене, тĕрĕ. Ашшĕ ăшĕ вĕçнĕ çын пек килкартишĕнђе урлă-пирлĕ уткаласа шухăшласа çÿреме тытăнђĕ. Унтан йапалисене курма хыçĕнђи пахђине илсе тухрĕçĕ.

Йапалисене хыçĕнђи кивелсе, çĕрсе тÿнме патне çитнĕ пĕр пĕђĕк кĕлетре усранă. Кам йапалисем пулнă ку йапаласем? тесен:—Уки аппа йапалисем. Вăл кађђа кайман хĕр пулнă. Вилнĕ ђухне, ман йапаласене никам та пÿрнипе тĕртĕнсе ан пăхтăр,

тесе каласа хăварнă. Çавăнпа ку йапаласем çапла нумай пурăнаççĕ. Апла каламан пулсан, татăкĕсем те йулмĕђђĕç халиђђен, терĕç. Вăл вилни нумай пулаťи? тесен:—150 çул пур пуљ, теççĕ. Мĕн пур йапали пĕтĕмпех хĕрарăм тавраш̆ĕ. Вăрăм, шалпар, шурă пиртен çĕленĕ кĕписен çĕввисене пурне те тăрăшшĕпех алă лаппи сарлакăшĕ пурçăнпа тĕрленĕ. Пӳштĕр вырăнĕсене те, темиçе тĕрлĕ тĕрĕпе илемлетнĕ. Пур тĕррине те лайăх таса пурçăнпа тĕрленĕ. Пурте халĕ анђах тĕрленĕ пек çутăлса йалтăртатса тăраççĕ. Тĕррисем çинђе мĕн-мĕн кăна тĕслĕ ђеђексемпе курăксен, хурт-кăпшанкăсен мĕлкисем çукши? Хăшин çинђе ђĕрĕ кăпшанкă ђупса пынă пекех курăнаť. Тăваткăл çаврака тутрисене, икĕ йенĕпе те çара пурçăнпа, темиçе тĕслĕ тĕрĕпе тĕрлесе, кĕççе пек хулăнлантарса, çӳçелентерсе, шерепелентерсе, шурă пир çинђе пĕр шурă çип те курăнмалла мар тунă. Вăл тутарсен йеверлĕ тутăрсем, Шупашкарти Ђăваш Тĕп Муçейĕнђе те пур. Анђах нихăшĕ те Уки тутрисене çитес çук. Тĕррисемпе, пысăккăшсемпе те, çӳçи-шереписемпе те, пур йенĕпе те Муçейрисем катăк тăраççĕ. Вĕсем çине пăхсан, ђăваш хĕрарăмĕсен тахçан авал-авалах алă тăвăçсем, çĕвви-тĕррисем темле ђаплă пулни палăрса тăраť. Тухйипе миçиххисен çумĕнђе шăрçисемпе нухрађĕсем анђах тăрса йулнă. Укçисене пĕтĕмпех çаратса пĕтернĕ. Мĕн пур йапали икĕ çӳпçе çинђе. Пĕр çӳпçине лайăххисене, теприне

нађартараххисене тултарнă. Кĕлетĕнђе вăл çӳпçесенђен урăх нимĕн йапала та çук. Йапалисене сутас мар тесе ашшĕ тем пекех хирĕçет. Ывăлне тем те каласа пĕтерет. Ывăлĕ пурĕ-пĕрех ашшĕ сăмахне пăхасшăн мар. Ашшĕ вара çава илђĕ те, панулми сатне кĕрсе утă çула пуçларĕ. Ывăлĕ йапалисене сутрĕ. Çав вăхăтра Н. Туйметăвăн Шупашкарти Рапфакра вĕренекен, мана пĕлекен ађа хăйĕн пек тепĕр ађапа пыђĕç те, аťа халĕ уçăлса çӳрер, тесе хире кивĕ çăва (масар) çине илсе карĕçĕ. Акă вăл çăва çинђе тутар çырăвĕ пек çыруллă, пысăк ђулсем выртаççĕ. Хăшĕ пĕтĕмĕшпех, хăшĕ икке-виççе катăлнă. Вăл ђулсен патĕнђи çĕре сысна ђавнă пек ђавса пĕтернĕ. Кунта капла мĕншĕн ђавнă? тесен: вăл ђулсем пурте çĕре путнăђђĕ, вĕсене Милли ђавса кăларса, шывпа çуса, çырăвĕсене çырса илђĕ, терĕç. Акă пĕр ђулĕ патне, курăк ăшне, пĕр шит тăрăшшĕ, икĕ пӳрне сарлакăшĕ çĕнĕ пир татăкне çурри тарач алă пӳрнисем пек туса каснă та, ун çумне çиплĕ йĕп ђиксе пăрахнă. Тата пĕр çăмарта хунă. Вĕсене мĕн тума пăрахнине ђăваш ваттисенђен ыйтса пĕлес тесе, пир татăкне çиппи-йĕппи мĕнĕпех илтĕм, çăмарти çавăнтах йулђĕ. Унтан ыраш хушшипе, ака сыпписемпе, йăранĕсемпе кайса, пĕр кӳлĕ хĕрне пытăмăр. Кӳле йĕри таврах мăй таран ыраш хупăрласа тăраť. Шывĕ лайăххăн курăнмасť те, пĕтĕмпех хăмăшхăйах кашласа лараť. Çӳлтен текерлĕксем тĕвиктĕвик! кăçкăрса пирĕн çине пăрăлтатса, вăшлатса

вĕçсе анса, çӳлелле хăпарса кайаççĕ. Те пире хăратас теççĕ, те хăйсем хăраççĕ.

Унтан кайаллах Тайрепин Микки патне пытăм. Çав вăхăтра ун патне ашшĕпе пĕр таван мăнаккăшĕ, питĕ ватă карђăк пыђĕ.

Епĕ ăна: есĕ, асанне, авалхи ђăвашсен йуррисене нумай пĕлетĕн пуљ, терĕм те, вăл мана хирĕç: Епĕр авал мĕн пĕлнĕ? Халĕ пурте çырăва вĕренеççĕ те, тем те пĕлекен пулаççĕ. Хамăр хĕрађах пĕр кĕнеке йурă çырса тултарнă ĕнтĕ. Ăçтан сăмахĕсене тупса çитерет, йепле ăсĕ-ăнĕ çитет, терĕ. Вăл кĕнекине мана кăтартĕши вăл? тесен: ма ан кăтарттăр, вăл тем йапала мар вĕт, терĕ. Унтан карђăкпа пĕрлех хăйсем патне карăмăр. Пӳрте кĕрсенех карђăк: çакă çын есĕ çырнă йурăсене вуласа пăхасшăн, терĕ. Хĕрĕ хытă шухăшласа тăрса, кĕнекине кăларса пађĕ.—Миçе йурă кунта? тесен: икĕ çĕр йурă та ытла. Çырсан пирĕн Кавал йалĕнђе пин йурă та тупма пулаŭ пуљ, терĕ.—Йуррусене çырса илме йураŭи? тесен, çырса ил, терĕ; 65 йурă çырса илтĕм. Пуринђен ытла хурлăхлă йурă. Паттăр йурăсем питĕ сахал. Мухтанса йурлакан йурă пĕртте çук. Пурте тенĕ пекех çамрăксен йурри. Хăй те лайăх, çийĕ-пуçĕ те лайăх, пурăнăçĕ те лайăх. Йуррисем ма питĕ хурлăхлăши? Акă хăш-хăш йуррисене пăхăпăр.

Тăвайккинђен аннă ђух
Пуçларĕ лаша тулама,
Вунпилĕк çула çитсессĕн
Пуçларĕ мана çын çиме.

Ђашки шурă, ђей тутлă—
Ĕçрĕм ăшăм çуннăран,
Йĕрет-йĕрет теç мана—
Йĕтĕм хуйăх пысăкран.

Атте килкартийĕнђе
Çын çĕклейми ђул пур теç,
Çын çĕклейми ђул мар-у
Епĕр ђăтайми çын сăмах.

Пур йурри те çак йурăсем йевĕрлĕрех. Хăш-пĕр йуррисене йурланă ђух, ађаш кăмăллă, йе хурлăхлă, хуйхăлă çыннăн ирĕксĕрех куççулĕ шăпăртатса анмалла.

Унтан йапаласене илсе, Шупашкара кайма Атăл хĕррине, Куславкка пристăнне, антăм. Акă унта виçĕ ђăваш арăмĕ; Хусана турă амăшĕ килнĕ çĕре кĕлле кайатпăр тесе пăраххут кĕтсе лараççĕ. Те хурăнташĕсем, те пĕлнĕ çыннисем, пристăњ çинђе ĕçлекен ђăвашсем: атăр халĕ ђей ĕçтерсе хăна туса йарар тесе икĕ хĕрарăмне хăйсем пурăнакан пристăњ çинђи пӳлĕме илсе кĕђĕçĕ. Виççĕмĕш ватăрах арăм та, йулташĕсемпе пĕрле кĕрессшĕн ута пуçларĕ. Пĕр арçынĕ ăна тем тума; есĕ кирлĕ мар, терĕ те, арăм кăмăлсăр пек пулса, тăп ђарăнса йулђĕ. Пăрахут кĕтсе тăракан ытти ђăвашсем, çапла икĕ çамрăкрах арăмсене илсе кĕрсе, пĕрне тăратса хăварнине курђĕç те:—авă йулташусене кĕлтума вĕрентсех йараççĕ, есĕ нимĕн пĕлмесĕрех кайатăн ĕнтĕ. Вĕсем çавă çамрăккисене анђах йуратаççĕ, сан пек ватă арăм кирлĕ мар

вĕсене, тесе пĕђђен йулнă арăмран кула пуçларĕçĕ. Арăм вĕсене хирĕç нимĕн ђĕнме те пĕлмерĕ. Кавал патĕнђи кивĕ çăва çинђен илнĕ тĕшмĕшлĕ пир татăкне çăв арăма кăтартса, ку пир татăкне çăва çине ма пăрахнă, терĕм. Арăм пир татăкĕ çине пăхма хăраса, куçне урăх йенелле пăрса тăрат̆.

— Ех турă, йепле ăна тытма хăрамарăн? Ађа туман арăм ађа тăвасшăн вилесене парне панă вĕт ăна! Çавăнпа вăл пире кашни вилĕшĕн хăйне уйрăм парне туса каснă, çĕлесе тăхăнма çиппе йĕп те ђиксе хунă, терĕ.

Тата пристăнре пĕр вăрăм çўçлĕ çын, те пуп, те тиаккăн, пăрахут кĕтсе, сĕтпе шур кулађă çисе ларат̆. Умне кăлпасси те вакласа хунă. Ун патне пĕр ватăрах çын пыђĕ те:—пайан ерне кун, есĕр пире типĕ тытма хушатăр, хăвăр тем те ђыхатăр. Толковолоссăй ђорт! тесе хуђĕ. Пупĕ ăна хирĕç: çул çине тухсан, йут çĕрте çиме йурат̆ вăл, терĕ. Ватă çын: молђђи луђшĕ! лектертсе йарăп! Çапла есĕр халăха турăран пистерсе пĕтертĕр те, халĕ ĕнтĕ турра ĕненми пулђĕç, тесе палкаса çўретĕр, терĕ.

Унтан пăрахутпа Шупашкара килсе, експонатсене вăхăтлăха муçейе хутăм. Пĕр ĕрнерен выстăвккă ваљђи илнĕ йапаласене Мускава йама Канаш хулине леçмелле тесе çыру илтĕм те, муçейри йапаласене илсе, Канаш хулине кайма тухрăм. Çул май тата урăх мĕн те пулсан тўрĕ килмĕи тесе, Канаша Çĕрпў урлă мар, урăх йалсем урлă

каймаллa пулђĕ. Каç пулнă ђухне Алманђ йалне çитрĕмĕр. Хăваттер ыйтма тесе пырсан йалсовет претçетаттĕлĕ хăй патĕнђех выртма хушрĕ. Експонатсем те тупса пађĕ. Кўршине туй курма та илсе карĕ. Ма кунта туйсене ĕçе тухма патне çитсен тин тăваççĕ? тесен:—Пирĕн туйа çакă вăхăтра нумайрах тăваççĕ, терĕ. Кунта туй урăхла. Туйне лупас айĕнђе (сарайра) тăваççĕ. Пўртре ватăраххисем сăра ĕçеççĕ. Туй курма пынă çамрăксем пĕтĕм килне тулнă. Ик-виç çĕртен сăра ĕçтереççĕ. Иккĕн-виççĕн харăс тăрса ташлаççĕ. Ташланă ђухне хĕрарăмсен шўлкемисем, сурпан çаккисем сиксе ђанкăртатса çех тăраççĕ. Кĕсли, кулăсĕ, параппанĕ пĕрмай йанăраса тăраççĕ. Хăшĕ алă çупса лараççĕ. Тепĕр кун претçетаттĕл хăйех Канаш хулине леçсе хăварђĕ.

Канаша çитсен йалсенђи лăпкă тăнăç пурăнăç сухалђĕ. Пăравуссем пĕр май пик!..-пик!.. кăçкăрса, тут-тут тут!.. çухăрса йанăратса, хăрăм пек хура тĕтĕм кăларса, пĕтĕм çĕре ђĕтретсе çўреççĕ, шăкшак шаккани, кĕрлени çĕрĕн-кунĕн илтĕнет. Ваксал таврашĕнђе урлă-пирлĕ çўреме те хăрушă пек туйăнаť. Урамĕсем питĕ пылђăк, пасар таврашсем тĕркĕш. Сутуçисем иртсе çўрекенсене пурне те: мĕн кирлĕ? тесе кăçкăрса тăраççĕ.

Канаш çўлĕ, тикĕс вырăнта лараť. Ђăваш Респуплĕкĕн шăнк варринђе. Мускавпа Хусан хушшинђи ђукунçул çинђе. Канашран Мускава пĕр тавлăкра. Хусана 4 сехетре çитме пулаť. Тата

унтах Улатăра ђукунçул йуппи кĕрсе кайт̆. Сутуилў тăвас ĕçре Канаш питĕ усăлă, паллă вырăн йышăнса тăрат̆. Йĕри таврах пысăк ђăваш йалĕсем хупăрласа тăраççĕ Тем ĕçлеттермелле пулсан та, ĕççыннинђен аптăрас çук. Вăрман та çывăх. Канаша пысăклатмалли, ђаплăлатмалли хатĕрсем, майсем пур.

Експонатсене Мускава ăсатма петтехниккума илђĕçĕ. Мана çывăхри йалсенђе татах шырама хушрĕç. Хăваттерсене кĕрсен кунта карђăк-кĕрђĕксем вăйсăр куçлисем ђасђасах тўрĕ килеççĕ. Ку таврари ђăвашсене анатри ђăвашсем теççĕи, турисем теççĕи? тесе ыйтрăм. Хăваттер хуçи арăмĕ: пирĕн патăртисем кунгисене анатрисем теççĕ. Турипе анатрисен ђикки çакă таврара. Епĕ хам тури ђăваш хĕрĕ, кађђа килтĕм кунта, анатри ђăваша. Пирĕн патăрта пурте шурă тăхăнаççĕ. Пит-куççене шурăпа шăлса пурăнаççĕ. Çăвăнпа вĕсен куçĕсем пăсăлмаççĕ. Кунта пĕвенĕ сăрлă кĕпе-йĕм тăхăнаççĕ. Пит-куçĕсене ге нумайĕшĕ çавăн пек кĕпейĕм çĕтĕкĕсемпе шăлаççĕ. Çавăнпа суккăр пулаççĕ вĕсем. Мана кунта кађђа килнĕ ђухне: ан кай унта, суккăр пулатăн, тесе калакансем те пулђĕç, терĕ.

Акă ыраш вырма та тухрĕç. Хире тухсан ăçта пăхнă унта, çын мăкăлт-мăкăлт туни, вĕлт те вĕлт ывăçĕсене çавăрса пăрахни курăнат̆. Пĕрмайах кăђăрт-кăђăрт çурла сасси илтĕнет. Вырман ыраш хушшинђи тĕл-тĕл ĕшне пек вырнă вырăнсенђе, çурăх кĕтĕвĕ пек кĕлтесем шăкăртатса вырташçĕ. Тем пек тирпейлĕ, таса, тĕпĕнђен вырса, кĕлтисене

вěтě, хитре, тăпăл-тăпăл çыхаççě. Ун пек çěмел, йе капан тунă ђухне тыткалама та çăмăл, капанě те хитре пулаť. Çапма та çăмăл, кěлте варрине пěрђě те йулмасť. Хире пуринђен ытла хěрарăм сырса илнě. Арçыннисем вăрçăра та нумай çухалнă. Ђукунçул таврашне, хуласене ěçлеме кайнисем те нумай. Хăш ана çинђе 3—4 хěрарăма та пěр арçын курăнмасť. Пěр çул хěрринђе выракан карђăкăн çурлине илсе пěр кěлте вырса пагăм.—Халě есě ђиперех выратăнçке, епě сирěн пек çынсене тырă вырма пěлмеççě пуљ теттěм, терě карђăк. Тата çултан 25—30 ђалăш пек шалалла вырса кěрсе кайнă пěр арçын, икě хěрарăм, каçалăк умне канма ларнă. Лашапа урапа çине пěр ушкăн арăм тийеннě те, Канашран йалалла анаççě. Çавă каçалăк умěнђе ларакан çынсен тěлне çитсен, пěр усěртерех арçын урапа çинђен анђě те, аллине тăрата-тăрата пăтратса, темěн те пěр намăс сăмахсем каласа, пěтěм вăйран кăçкăрса вăрçа пуçларě. Ана çинђи арçын йенне пăхса:—намăссăр кěççе лит есě!.. Кам пур сан пек икě арăмпа пурăнакан? Çынран та вăтанма пěлместěн? Турăран та хăрамастăн, тет. Лешě ăна хирěç нимех те ђěнмест. Арăмěсем ăна хирěç:—çапла çавă! çын ваљђи иккě те пур, сан ваљђи пěр арăм та çук. Есě сăмакун кўпме анђах пěлетěн, арăм усрама пěлместěн. Кěр халě кунта!.. çурлапа мăйăнтан туртăпăр, тесе, çурлисене иккěш те çўлěлле çěклесе кăтартаççě. Унтан вăрçакан арçынна йулташěсем урапа çине

ђёнсе лартрĕçĕ те, çулпа йалалла ђуптарса карĕçĕ. Хам пĕр кĕлте вырса панă карђăкран: ма вăрçаççĕ вĕсем? тесе ыйтрăм.—Вăрçакан арăмсем вĕсем аппăшĕпе йăмăкĕ пулаççĕ. Вĕсемпе пĕрле выракан арçын пĕрин упăшки, пĕрин йыснăшĕ пулаť. Урапа çинђен анса вăрçакан арçын çавă йăмăкĕ тенине кађђа илсеђĕ. Ёçкĕ пирки килĕштерсе пурăнайма-рĕç. Унтан ун арăмĕ уйрăлса, йыснăшĕ патне пурăнма карĕ. Икĕ а ăмпа пурăнан тесе вăл хăйĕн пуçанăшнех калаť. Мĕн ун пек кўлешмелли (кĕвĕç-мелли) пур! Ун пек пулсан, аппăшĕ ăна усрас та çук, терĕ карђăк.

Йалсенђи халăх хире саланса, хĕрў ĕçе тытăнђĕ. Експонатсем шыраса çўремелли вăхăт иртрĕ. Канаш таврашĕнђи йалсенђе илнĕ мĕн пур експонатсене каллех петтехниккума леçсе паратăп та, Шупашкара таврăнатăп. Унтан хам çуралнă çĕр-шыва, Ђистай уйесне, кайатăп.

1927-мĕш çул, Шупашкар.

# ТУПМАЛЛИ.

*Стр.*

1. Шелепи (умсăмах) . . . . . . . . . 3
2. Аслă Октăпĕр . . . . . . . . . . . 7
3. Аслă Октăпĕр Рев. ђăв хал. мĕн пађĕ 9
4. Ђăваш хĕрарăмĕ . . . . . . . . . 11
5. Çирĕммĕш ĕмĕр . . . . . . . . . 12
6. Çул курки . . . . . . . . . . . 15
7. Шупашкар . . . . . . . . . . . 18
8. Çарăмсанпа хăнтăрçа . . . . . . . 35
9. Ĕç çийĕ . . . . . . . . . . . 44
10. Çĕрпӳ уйесĕнђе çӳрени . . . . . . 53

Хакĕ 40 пус